Чебоксарская Ц. Б. им. Горького 0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, перлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 26 ВЫРСАРНИКУН 296(4808)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Çуракине кăтартуллă хатĕрленер

Иртнĕ йалхуçалăх çулĕнче пирĕн социалисăмла çĕрĕçĕ пĕтĕм тĕнчене хăйĕн хăватлă вăйĕпе организацилĕхне лайăх кăтартса пачĕ. Çичĕ мĕлйард пăт патне тĕш тырă туса илни, çĕрмамăк, йĕтĕн, сахăр кăшманĕ тухăçĕ пысăк пулни, колхозсемпе колхозниксен тупăшĕ пысăк пулни—çаксем пурте пирĕн колхозсемпе совхозсен пултарулăхĕ пысăкки çинчен, йалхуçалăхĕ нихăш çĕршывринчен те хăвăрт ÿссе пыни çинчен каласçĕ. Епĕр ĕнтĕ, социалисăмла шултра хуçалăх йĕрки малта тăнине çултан çула вăйлăрах кăтартса пыракан, çав май ĕçсыннисен пурнăçĕ пĕр майах лайăхланса пыракан тапхăра кĕтĕмĕр.

Колхозла йалта хаљ, хулари пекех, политикăлă тата производствăлă активлăх пихăçанхинчен çÿле çĕкленсе пыни палăрат. Çав çĕкленÿ суйлав кампанийĕ кунĕсенче уйрăмăнах вăйлă пулчĕ.

Колхоз хресченĕсем коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăланипе хресченсене помешчиксемпе кулаксен пусмăрĕнчен хăтарнă, пуйан та культурлă пурнăç çулĕ çине тĕрĕс илсе пынă большевикла партишĕн сасăларĕç.

Промышленнăçри стахановецсем пекех, малта пыракан колхозниксем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çĕнтерниние производствăла çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе, çĕнĕ рекордсемпе, пысăк ĕç тухăçлăхĕпе палăртасшăн çунаççĕ. Çак кунсенче „Правда" хаçатра пичетлесе кăларнă Краснодар крайĕнчи Штейнгардски машинă-тракторла станцинчи комбайнерсемпе трактористсем чĕнсе калани те çавнах кăтартса парат. Çав чĕнсе каланин авторĕсем пур колхозсемпе колхозниксене çуракине лайăх хатĕрленес тĕлĕшпе социалисăмла ăмăрту сарса йарса, сулсен 7—8 мĕлйард пăт тырă илессинчен татах та вăйăларах, татах та лайăхрах кĕрешме чĕнеççĕ.

Çуракине лайăх кĕтсе илес, кĕске срукра ирттерес тата тырпул тухăçне ÿстерес тесен, урăх вăхăтра мар, халь, хĕллехи уйăхсенче хатĕрленмеле, çуракине кирлисене пурне те тимлĕн тĕрĕслесе хумала. Çавах та çак пуринчен те паллă правилăна хăшпĕр руководительсем ăнланса илеймен.

Çуракине тухиччен, акă, тĕслĕхрен, 250 пин трактор йусаса хумала. Çав шутран 115 пин трактор таран çак çулти тăваттăмĕш кварталта йусаса çитермеле пулнă. Квартал иртет, анчах та декабĕрĕн 10-мĕшне 20.378 трактор çеç ремонтран тухнă, иртнĕ çулхинчен 13.000 пине йахăн сахалрах. Тăваттăмĕш квартала планне 18 процент çеç тултарнă, пĕтĕм ремонт планне пурĕ те 8 процент çеç. Тракторсене йусас ĕçе пачах тытăнман йе тытăнсан та кăшт çеç тукаланă облаçсем те пур. Хаљ ĕнтĕ, çĕрĕç оргăнĕсен айăпĕ пирки тăваттăмĕш квартала ахалех иртерсе йани, тракторсене йусамали плана тултараймании уçăнах курăнса тăрат.

Кунта çакна та палăртмала. Çав ĕçе çĕрĕç оргăнĕсене йăва çавăрнă троцкисла-бухаринла шпионсем тата сăтăрçăсем хăйсен аллисене хунă. Анчах, кайа йулнине пĕтерме вăхăт çителĕклĕ пулнă пулин те, хаљ те нимĕнле резуљтат та курăнмаст-ха. Ĕçе тытăнмасăр тăракан, станоксене хатĕрлесе çитермен, хăйсене кирлĕ материалсене илсе хатĕрлемен мастерскойсем вуншарăн шутланаççĕ.

Тракторсене йусас ĕç пахалăх йенчен те çителĕксĕр. Тĕслĕхрен, Воронеж облаçĕнчи Россошанск машинă-тракторлă станцинче йусаса хунă 8 трактортан 7 тракторне бракламала пулнă,—çав тери пит йапăх йусанă. Ремонтран тухнă тракторсене йепле йĕркепе йышăнмали çинчен калакан инструкцисем вырăйсенче çук, кашни директор çав ыйтăва хăй тĕрлĕ ăнланат, çавăнпа та брак нумай тухат. ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çак йулашки вăхăта çитиччен çав факта курмасăр тăнă. Çитменне тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аппаратĕнче те ремонт мĕнле пынишĕн ответлă çын тупма май çук. Отраçљ тăрăх ĕçлекен управленисем вăл ĕçрен пăрăнса тăнă, çав йенĕпе ĕçлекен уйрăм оргăн организацилемен.

Тепĕр пысăк ыйту—вăл вăрлăх хатĕрлесси. Паха вăрлăхпа акма пирĕн майсем пурте пур, вăрлăхсене суйлама тата тасатма, вăрлăх пахалăхĕшĕн тăрăшма çеç кирлĕ. Анчах та вăрлăхшăн çавăн пек тăрăшни çук-ха. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи туллимар сведенисене илсе пăхсан та, вăрлăх тасатас ĕç калама çук йерипен пыни курăнат; вăрлăхлăх хăварнă тырă çине вăрлăх валљи йурăхлă мар тырă йарса хутшăнтарни çинчен калакан фактсем те нумай. Тĕслĕхрен, Воронеж облаçĕнчи лабораторисенче тĕрĕсленĕ 267 пин центнер вăрлăхран 122 пин центнер вăрлăха çÿпĕлĕтсе йарса йурăхсăр тунă, 20 пин центнер нÿрĕлĕх йенчен кондициллĕ мар тата 25 пин центнер вăрлăхăн шăтас хăвачĕн нормипе килĕшмест.

Вăрлăхсене трийер витĕр суртласа кăларас ĕç пит кайа йулса пырат. Машинăсем çитмесçĕ тесçĕ хăшпĕрисем, анчах çав вăхăтрах алăра пур машинăсемпе пит йапăх усă курассĕ. Вăрлăх тасатма уйрăм пунктсене пур çĕрте те организацилемен. Саксем пите вăрлăхсене халех тĕрĕслесе пăхма кирлине, вăрлăх тасатас ĕçе хăвăртлатма кирлине кăтартса парассĕ.

Йалхуçалăх çулĕн итогĕсем хыççăн çĕнĕ, çуракине лайăх хатĕрленмешкĕн кирлĕ условисем колхозсемпе совхозсен пурте пур. Пĕр йалăна çеç кирлĕ: малта пыракан пуçаракăвĕсене йертсе пыма пултаракан чăн-чăн большевикла руководства кирлĕ.

Çĕрĕç оргăнĕсене çамрăк отрйад, пултаруллă работниксем, социалисăмла ĕçе пĕтĕм вăйне паракан çынсем çĕнĕрен хутшăнчĕç. Хаљ тăрă шыв çине кăларнă халăх тăшманĕсене çĕрĕç оргăнĕсенче вырăнтарас текен çĕрĕç йăлана хăвăртрах пĕтермеле.

Пирĕн условисенче хуçалăхшенник йалчĕ,—тет Сталин йулташ,—пысăк йат пулса тăрат, совет условийĕнче руководител пулни вăл—пысăк чыса тата халăх куçĕнче шанчăклине пĕлтерет.

Çав пысăк чыса, пысăк шанчăка çухатас мар тесен, çĕрĕç оргăнĕсенчи работниксен пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле.

Çуракине хатĕрленес ĕçе ăнăçлă илсе пырассишĕн парти организацийĕсем çине пĕтĕм ответлăх ÿкет, йалхуçалăхне йертсе пырассинчен вĕсене никам та хăтарман, çавăнпа вĕсен çак çитес çывăх вăхăтрах пур çитменлĕхсене те пĕтерме тата сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çуракине чыслă ирттерме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле.

(„Правда" умстатйинчен).

Стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ умĕн

Совет çĕршывĕн фабрикĕсемпе заводсенчи рабочисем стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхне хатĕрленсе социалисăмла ăмăртува çĕнĕ вăйпа сарса пыраççĕ.

Мускаври Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри чаплă фрезеровщик стахановец орденоносец, ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕ Гудов йулташ декабĕрĕн 23-мĕшĕнче хăйсен заводĕ 5 çул тултарнă йатпа чаплă рекорд тунă. Вăл нормăна 9.050 процент тултарса 1.017 тенкĕ те 84 пус ĕçлесе илнĕ. Вăл кун заводри 103 стахановец сменăри нормăсене 200 процент тата ытларах та тултарнă.

„Шахтантрацит" трестăн 5 №-лĕ шахтă крепильщикĕ Федор Востриков йулташ чаплă рекорд тунă. Вăл сменă хушшинче 35 мăшăр рамă лартса 35 нормă тултарнă.

Украинăри Днепродзержинскри „Правда" йачĕпе тăракан вагонсем тăвакан заводра инструмент цехĕнчи стахановец-комсомолец Бродков йулташ декабĕрĕн 20-мĕшĕнче сменăри нормăна 1.000 процент тултарнă. Фасонно-литейнăй цехри хурçă шăратакан участкăри Симоненко йулташ смени çулталăкри программăна срукченех тултарнă.

Азнефткомбинатăн чи пысăк трестсенчен пĕри—„Сталин-нефт" çулталăкри программăна срукченех тултарнă. Çĕршыв 3.768.500 тоннă нефт илнĕ. Трест коллективĕ параласа тарăнран та тарăн шăтарма вĕренсе çитес ĕçре пысăк çитĕнÿ тунă. Çулталăк пуçланнăранпа талăкра нефт кăларассине 1.000 тоннă таран ÿстернĕ. Нефт кăларакансем виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулне тивĕçлĕ кĕтсе илме хатĕрленсе, планран ытлашши 94.000 тоннăран кайа мар нефт пама йышăннă.

(ТАСС).

Граждăн авиацийĕн почтă самољочĕ çухалса кайса ирĕксĕрех Манчжоу-Го çĕрĕ çине анса ларнă

ХАБАРОВСК, декабĕрĕн 24-мĕш. (ТАСС). Граждăн авиацийĕн почтă самољочĕ, Владивосток—Хабаровск çулĕ çинче çÿрекенскер, декабĕрĕн 19-мĕшĕнче Хабаровскăна вĕçсе каймалла тухнă. Вăл самољот çинче икĕ çын тата почтă пулнă. Самољот хăй каймали вырăна пыман. Вăл самољота хамăр территори çинче шыранă, анчах тупайман. Çав хушăрах, илнĕ сведенисем тăрăх, декабĕрĕн 19-мĕшĕнчех Гродековоран хĕвелтухăç йенчи чукунçул районĕнче самољот вĕçнине курнă. Вăл—çухалнă самољот пулнă. Самољот çухалса кайса ирĕксĕрех Манчжоу-Го çĕрĕ çине анса ларнă пулмала.

Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, пĕтĕм тĕнчери пĕрле йышăннă йĕрке тата Советпа Йапони-Манчжури влаçĕсем çухалса кайса ирĕксĕрех йутçĕршыв çине анса ларнă самољотсене хире-хирĕç парас практикăна йĕркеленĕ тăрăх, йутçĕршыв ĕçĕсен халăх комиссариачĕ ССР Союзĕн Харбинри генераљнăй консулне Манчжури влаçĕсенчен самољота, çынсене тата почтăна хăвăртрах пама ыйтма хушнă.

Совет Украини çирĕм çул тултарчĕ

И. СТАЛИН

УКРАИНĂ ТĔВВИ

(„Известия ВЦИК" хаçатăн 47 номĕрĕнче, 1918 çулти мартăн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă)

Февраљ вĕçĕнче, Германипе мир тăвиччĕнех, Украина Совет республикĕн Халăх секретариачĕ Бреста: вăл Германи коалиципе Кийев ради тунă договор çине ал пусма килĕшет тесе пĕлтерме делегаци йанă.

Брестра Германи командовани представителĕ, пĕлмен çын мар Гофман, Халăх секретариачĕн делегацине йышăнман, унпа мирлĕ калаçусем тума вырăнлă марри çинчен пĕлтернĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Германипе Австро-Венгри ударникĕсем Петљура-Винниченко гайдамак отрйачĕсемпе пĕрле Совет Украини çине тапăнма хатĕрленнĕ.

Мир мар, Совет Украинине хирĕç вăрçă—çакăн пек Гофман отвечĕн тĕп шухăшĕ.

Кийев радипе ал пусса тунă договор тăрăх, Украинăн Германине апрел иртиччен 30 мĕлйун пăт тырă памала. Епĕр ĕнтĕ кунта Германи хушнă тăрăх „ирĕккĕн руда турттарса тăмали" çинчен каламастпăр та.

Совет Украинин халăх секретариатне договорăн çак пункчĕ, иккĕленмели çук, паллă пулнă. Винниченко мирлĕ договорĕ çине ал пусма официаљнă килĕшÿ парса вăл мĕн тăвасса пĕлнĕ.

Çапла пулсан та, Германи правителстви, Гофман урлă, Украинăри пĕтĕм советсем,—хуларисем те, йалтисем те,—йышăннă Халăх секретариачĕпе мирлĕ калаçусем тума килĕшмен. Вилĕсемпе тунă сойуза, çавăрса çапса хăваласа йанă Радапа тунă Сойуза вăл Украинă халăхĕ йышăннă халăх секретариачĕпе,—пĕртенпĕр вăл кăна „кирлĕ хисеп таран" тырă пама пултарат,—унпа мирлĕ договор тăвасран мала хунă.

Çакă вăл—Австро-Германи вăрçăпа килнин тĕп шухăшĕ тырă илессинче çеç мар, тата, пуринчен ытла—Украинăра Совет влаçне пĕтерсе хурса буржуаллă кивĕ режима тепĕр хут тăварасси пулнине пĕлтерет.

Çакă вăл—вĕсем Украинаран мĕлйуншар пăт тырă илсе тухасшăн пулнине кăна мар, тата Украинă рабочисемпе хресченĕсенчен йунпа кĕрешсе илнĕ влаçа туртса илсе ăна помещиксемпе капиталиссене парса вĕсене правасăр хăварма тăнине пĕлтерет.

Австрипе Германи империалисĕсем хăйсен штыкĕсемпе çĕнĕ, намăсла пусмăр илсе килеççĕ, ку пусмăр ĕлĕкхи, тутарсен пусмăрĕнчен пĕре те кайа мар—çакăн пек ĕнтĕ хĕвеланăçĕнчен вăрçăпа килнин тупсăмĕ.

Çакна Украинă халăхĕ туйат пулмала, вăл çине тăрсах отпор пама хатĕрленет. Хресченсен хĕрлĕ çарне туни, рабочисен хĕрлĕ гвардине мобилизацилени, малтанах хăраса ÿкнĕ хыççăн, „цивилизованнăй" пусмăрçăсене хирĕç чылай ăнăçуллă çапăçусем туса ирттерни, Бахмача, Конотопа, Нежина илни, Кийев патне пыни, пусмăрçăсене хирĕç вăрçа пиншерĕн тухакан массăсен хаваслăхĕ ÿснĕçем ÿсни—акă мĕнпе ответлет пусмăрçăсем тапăнса килнине хирĕç халăх Украини.

Хĕвеланăç йенчен килекен йутçĕршыв пусмăрне хирĕç Совет Украини тăван çĕршыв ирĕклĕх вăрçине çĕкленет—çакăн пек ĕнтĕ Украинăра пулса пыракан ĕççен тупсăмĕ.

Çакă вăл—кашни пăт тырра, кашни тимĕр-тăмăр татăкне германцăсен çапăçса илмеле пуласçине, Украинă халăхĕпе хайаррăн тытăçса вăрçăра çапăçса илмеле пуласçине пĕлтерет.

Çакă вăл—нимĕççен тырă илмешкĕн, трон çине Петљура—Винниченкона лартмашкăн Украинăна чăннипе вăрçăпа туртса илессине пĕлтерет.

Нимĕççем „кĕске вăхăтра çапса" пĕр харăсах икĕ мулкача тытма шутланинчен (тырă та илес, Совет Украинине те çапса хуçас) йутçĕршыв пусмăрçисен Украинăри çирĕм мĕлйунлă халăха хирĕç (унăнне тыррине те, ирĕклĕхне те туртса илесшĕн) вăраха пыракан вăрçă пулса кайма пултарасси курăнсах тăрат.

Украинă рабочисемпе хресченĕсем „цивилизованнăй" пусмăрçăсене хирĕç паттăрла кĕрешме хăйсен вăйĕсене шеллес çукки çинчен калама кирли тата.

Украинăра пуçланнă тăван çĕршыв вăрçи пĕтĕм Совет Российĕ пур майсемпе те пулăшĕ тесе шанса тăма пултарасси çинчен кăтартса пама кирли тата?

Украинăра вăрçă вăраха пыракан вăрçă пулса тăрса, йулашкинчен, Российăри пĕтĕм тÿрĕ те ырă кăмăллă çынсен хĕвелтухăçĕнчен килекен çĕнĕ пусмăра хирĕç тăракан вăрçи пулса кайсан мĕн вара?

Нимĕç рабочийĕсемпе салтакĕсем çав вăрçă пынă хушăра, йулашкинчен, Германире хуçа пулса тăракансен ĕмĕчĕ „нимĕççен тăван çĕршывне сыхлас" тĕллев мар, çисе кÿпĕннĕ империалисла тискер кайăкăн тăранманлăхĕ кăна пулнине ăнланса илсен, çавна ăнланса илсе тивĕçлĕ практикăлă выводсем тăвас пулсан мĕн вара?

Çакăнтан паллă мари ĕнтĕ вара, унта, Украинăра, пĕтĕм тĕнчери халљхи пурнăçăн тĕп тĕвви сыхăнни,—Российăра пуçланнă рабочи револљуцин тĕвви тата Хĕвелтухăçĕнчен килекен контрреволљуцин тĕвви çыхăнни.

Çисе кÿпĕннĕ империалисла тискер кайăк Совет Украининче хăйĕн мăйне хуçĕ—çакăн патне илсе пымасти вара халљхи ĕççен каçарусăр логики?..

И. СТАЛИН

УКРАИНĂ ИРĔКЕ ТУХАТ

(„Жизнь национальностей" хаçатăн 4-мĕш номĕрĕнче 1918 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнче пичетленĕ)

Украинă хăйĕн пуйанлăхĕсемпе такçантанпах ĕнтĕ империалиссем експлоатацилекен çĕршыв пулса тăрат.

Революциччен Украинăна Хĕвеланăçĕнчи империалиссем, сăмах калашле, шăппăн, „вăрçăлă çапăçусемсĕр", експлоатациленĕ. Украинăра калама çук пысăк предприйатисем (çĕркăмрăкĕ кăларакан, тимĕр-тăмар тăвакан т. ыт.) организацилесе тата акцисен ытларахăшне хăйсен аллине çавăрса илсе, Франци, Белги тата Англи империалисĕсем Украинă халăхĕнчен куç-кĕрет, „саккунлă" йĕркепе, шавламасăр мĕн пур сĕткене ĕмсе, сăхса тăнă. Октаберти революци хыççăн картинă улшăнчĕ. Октаберти революци, империалисăм çипписене татса тата çĕрсемпе предприйатисене халăх пурлăхĕ туса хурса, империалиссен „йаланхи", „шавламасăр" експлоатацилес майне пĕтерсе хучĕ. Çавна тунипе империалиссене Украинăран хăваласа кăларса йанă.

Анчах империалисăм чакасшăн пулман, вăл çĕнĕ положенипе нийепле те килĕшесшĕн пулман. Çакăнтан Украинăна вăйпа, ирĕксĕрлесе чуралантарма „кирли", унăн çĕрĕсене оккупацилеме*) „кирли" тухса тăнă.

Украинăна оккупаци тума пуçлакансем Австрипе Германи империалисĕсем пулнă. „Рада" тата „гетманство" хăйсен „хăйхаллĕнлĕхĕпе" çав оккупацине меллĕ пытарса тăракан, Украинăна Австрипе Германи империалисĕсем експлоатацилениине „пиллекен" вăйă, ширмă çеç пулнă.

Австрипе Германи Украинăна оккупацилесе тăнă вăхăтра Украинă халăхне вĕçĕ-хĕррисĕр нимĕн вырăнне хуманни тата Украинă халăхĕ темĕнчул хура-шурă тÿсни, рабочисемпе хресченсен организацийĕсене çĕмĕрсе аркатни, промышленнăçпа чукунçул ĕçĕ пĕтĕмĕшпех йĕркерен тухса кайни, çынсене çакса вĕлернипе пере-пере вĕлерни—хĕвеланăçĕнчи империалиссен влаçĕнче тăракан Украинă „хăйхаллĕнлĕхĕн" йаланхи çав картинă камшăн паллă мар?

Анчах, Австрипе Германи империалисăмне çĕмĕрсе тăкни тата Германире революци çĕнтерни Украинăн положенине тĕпрен улăштарчĕç. Ĕçлевлĕ Украинăна империалисăм пусмăрĕнчен ирĕке кăларас çул уçăлчĕ. Украинăна тустарса чуралантарасси вĕçне çитет. Украинăри вăйлăланнăçемĕн вăйланса пыракан революцилĕ пушар империалисăмăн йулашкисене, унăн „нацилĕ" хăнăхувĕсемпе пĕрле, шăлса ыватĕ. Революци хумĕсем çинче çуралса тухнă „Украинă рабочисемпе хресченсен вăхăтлăх правителстви" Украинăри рабочисемпе хресченсен пуçпулса тăнă никĕс çинче, çĕнĕ пурнăç майлаштарса тăвĕ. Украинăри совет правителствин „манифесĕ" хресченсене—помещиксен çĕрĕсене, рабочисене—фабрикăсемпе заводсене, мĕн пур ĕçсыннисемпе експлоатацилекенсене—тулли ирĕклĕх тавăрса паракан „манифесĕ",—çав историлĕ манифес Украинă тăшманĕсен сехрине хăптарса аслати пек йанăраса кайĕ, Украинăн пусмăрта пурăннă ывăлĕсемшĕн савăнма тата ăшчике лăплантарма ырă пурнăç çитсе килессине систерекен чан сассийĕн йантăраса кайĕ.

Анчах кĕрешÿ пĕтмен-ха, çĕнтерÿ татăклăнах пулса çитмен ха. Чăн-чăн кĕрешÿ Украинăра пуçланчĕ кăна.

Нимĕç империалисăмĕ йулашки кунсенче пурăнса иртернĕ вăхăтра, „гетманство" вилĕм умĕнхи йулашки тытамакпа силленсе хăйĕн пурнăçне иртернĕ вăхăтра, Англипе Франци империалисăмĕ çар пухат, Украинăна оккупацилеме Крымра çар антарма хатĕрленет. Вĕсем Англипе Франци империалисĕсем, Украинăна оккупацилекенсен хаљ пуш вырăнне йышăнма хатĕрленеççĕ. Кунпа пĕрле çийеле „çĕнĕле" манерленнĕ „хăйхаллĕнлĕх" текен кив лозунгпа авантурис Петљурă пуçра тăракан „Украинă директорийĕ" — Украинăна Англипе Франци оккупацилессине витсе тăма „гетманстăран" меллĕрех çĕнĕ ширмă туса тăрат!

Чăн-чăн кĕрешÿ Украинăра малта-ха.

Украинăри совет правителстви чĕнсе кĕтмен çĕнĕ хăнасене—Англипе Францирен килсе чуралантаракансене—тивĕçлĕ отпор пама пултарасси пирки епĕр иккĕленместпĕр.

Украинăри совет правителстви Винниченко-Петљура лагерĕнчи приклÿчени шыракансен—чуралантаракансем килессине пĕлетăркачах йе ăна-кăна пĕлмесĕр хатĕрлекенскерсен—реакцилĕ рољне тăрă шыв çине кăларма пултарасси пирки епĕр иккĕленместпĕр.

Украинăри совет правителстви хăйĕн тавра Украинăри рабочисемпе хресченсене пĕтĕçтерме тата вĕсене кĕрешÿре çĕнтерÿ патне чыслăн илсе кайма пултарасси пирки епĕр иккĕленместпĕр.

Советла Украинăн мĕн пур тÿрĕ ывăлĕсене Украинăн çамрăк совет правителствине пулăшма, çакăнпа вара Украинăна пăвакансене хирĕç пыракан паттăрла кĕрешÿве çăмăллатма епĕр чĕнетпĕр.

Украинă ирĕке тухат—ăна пулăшма васкăр.

*) Çĕршыва йут çарсем кĕртсе йышăнни.

КИЙЕВ, декабĕрĕн 24-мĕш. Çирĕм çул кайала, 1937 çулхи декабĕрĕн 24-мĕшĕнче, Украинăри Советсен пĕрремĕш сйесĕ уçăлнă. Вăл сйес Украинă Советлă Социалисăмлă Республикĕ тума йышăннă. Халĕ Совет Украинин ирĕклĕ халăхĕ çав мухтавлă йубилейе пысăккăн хаваслăнса уйавлат.

Украинă халăхĕн праçникĕ

Республика столицине уйав чухнехи пек илемлетнĕ. Пур çĕрте те хĕрлĕ йалавсем, транспарантсем, плакатсем, лозунгсем. Çуртсене иљљуминацилене тата аслă Сталинпа унăн соратникĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ.

Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче оперăпа балет театрĕнче парти, профсойуз тата комсомол организацисем хутшăннипе Кийев хула совечĕн чаплă пленумĕ пулса иртнĕ.

Чаплă пленумăн хисеплĕ председателне тăвăллăн овици туса Сталин йулташа суйланă.

Украинăра совет влаçĕ çирĕм çул тултарни çинчен Украинă ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ Марчак йулташ доклад тунă.

Пленум Мускав делегаци представителĕ Плетенский й. саламланине пысăк çĕкленÿпе итленĕ. Вăл Украинă ĕççыннисене Мускав хулинчи рабочисен, служăшчисен тата интеллигенци йачĕпе саламланă. Пленума çавăн пекех тата Молдави делегацийĕ, пограничниксен, Кийеври стахановецсен, Кийев облаçĕнчи колхозниксен, Хĕрлĕ Çар çарçĕсен тата интеллигенци делегацийĕсем саламланă.

Пленум тăвăллă, нумайччен алă çупса халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йамă йышăннă. Пленумра пулнисем пысăк хавхаланупа Молотов, Ворошилов, Калинин, Чубарь тата Коснор йулташсем патне саламлă çырусем йама йышăннă.

(ТАСС)

Колхоз тупăшне тĕрĕс валеçмеле

Сĕнтĕрвăрри районĕнче хăшпĕр колхозсенче йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсса тырпулсене валеçме тăнă. Йурйево колхозĕнче устав çинче кăтартнă тăрăх вăрлăх, фураж тата страховой фондсене çителĕклĕ уйăрмасăрах тупăшсене валеçме пуçланă. Ураково колхозĕнчи счетовод колхозниксем ĕçленĕ ĕçкунĕсене тĕрĕссипе шута илсе пымасăр пăтраштарса пĕтернĕ. Н. Брызгалов колхозника нимĕн ĕçлемесĕрех 100 ĕçкунĕ, В. Фролова—60, А. Муравйова—30, Йе. Семенова—20, Н. Павлова—10 ĕçкунĕ ытлашши çырса панă. С. Горшков колхозникĕнне 20 ĕçкунĕ, Масйагинăнне 10 ĕçкунĕ çырмасăр хăварнă. Чĕнерти „Стрела“ колхозра 19 çынăнне 75 ĕçкунĕ ытларах çырмасăр хăварнă тата 22 çынăнне 30 ĕçкунĕ ытлашши çырнă.

Кĕчкейри „Дружба“ колхозра пайанхи куна çитсе те аван çапса пĕтермен. Шупашкар Ĕсмĕлĕнче „Атăл“ колхозра та аван çапассине вăрăма тăсаççĕ. Утаçкассинчи „Коминтерн“ колхозра (колхоз председателĕ Малинов), Вăрман Пилемеç колхозĕнче (колхоз председателĕ Петров) халĕ те 1937 çулшăн колхозниксем пурĕ миçе ĕçкунĕ тунине кăтартакан списока колхозниксене курăнмала вырăна кăларса çакман. Аслă Ăстакасси, Пĕччен Хыр колхозĕсенче колхозниксем мĕн чухлĕ ĕçленине ĕçкĕнекисем çине çырса тухман.

В. В.

Колхоз пухувĕнче

ШĂХАСАН. Шуркассинчи Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз тупăшсене валеçме хатĕрленет. Декабĕрĕн 23-мĕшĕнче колхозăн аслă пуху пулса иртрĕ. Колхоз председателĕ отчот туса пачĕ.

— Пирĕн колхоз кăçал нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕ. Кунпа епĕр саванатпăр. Кашни ĕçкунĕ пуçне 12-шер килограм тĕштырă валеçĕнет. Колхозниксенчен 500 пăт тĕштырă илекенсем пур, вĕсем çаксем: Сорокин Степан, Андрианов Федор, Иванов Тарас т. ыт. те. 300—400 пăт илекенсем татах нумай. Çакăн пек вăйлă тырпул туса илме пире агрономсем вĕрентрĕç. Епĕр вĕсене халљ тав тума тивĕç,—тесе пĕтерчĕ колхоз председателĕ хăйĕн отчотне. Колхозниксем алă çупса кăмăлларĕç. Кун хыççăн колхозăн чаплă стахановецĕ Сорокин Степан кĕске сăмах каларĕ.

— Епĕ, чухăн çын ачи, ĕлĕк пулсан 5 пăт тырă та ниçтан ĕçлесе тупайрас çук. Халљ епĕ колхозра лашасене пăхса тунă ĕçкунĕсемшĕн 500 пăт тĕштырă илетĕп. Ку тырă мана çемйепе 8 çул пурăнма çитет. Çакăншăн епĕ хамăр йуратнă аслă Сталин йулташа пысăк тав тăватăп. Сталин йулташа нумай ĕмĕр пурăнма сĕнетĕп.

Колхозниксем Сорокин йулташ сăмахне пит пысăк хаваслăхпа алă çупса йышăнчĕç.

Йермек.

Çĕрулми вăрлăхне çĕресрен тата сивĕрен сыхламала

Колхозсем обйазателнăй йĕркепе Кавалри крахмал заводне çĕрулми панă чухне чылай çĕрте çĕрулми чĕресем сарăлни курăнчĕ. Çĕрулми чĕресенчен пуринчен ытларах йĕпе çĕрĕк чирĕ, фитовтора тата ункăласа çĕртекен чирсем сарăлнă. Стандартлă суртсене чылай çĕрте урăх тĕрлĕ суртсемпе хутăштарса йанă пирки çĕртекен чирсене питех парăнакан мар суртсем те çĕреççĕ.

Вăрмар районĕнче кăçал чылай колхозсенче çĕрулми çĕрме тытăннă. Çапла пулсан та, çĕрулми чĕресемпе кĕрешес ĕç кунта пуçланса кайман-ха. Акă, „12 лет Октября“ колхозра вăрлăхлăх хăварнă çĕрулми 10 процент таран çĕрсе пĕтнĕ, „Пионер“ колхозра 8 процент, „Победа“ колхозра 12 процент çĕрнĕ.

Хăшпĕр колхозсенче тата çĕрулми вăрлăхне шăнтса пĕтерес хăрушлăх пур. Орнарти „Победитель“ колхозра çĕрулми хывнă подвала ăшăтмаççĕ. Çĕрулми вăрлăхне чиртен тата шăнса пăсăласран сыхлас тесен, чи малтанах подвалти температурăпа сывлăх нӳрлĕхне йĕркелесси çине çаварăнса пăхмала. Температура Цељси градусникĕпе +1—3 градус таран, нӳрлĕх 80—85 процент пулсан, çĕрулми сивĕрен те, чир-чĕртен те лайăх сыхланса усранма пултарат̆.

Подвалра çĕрулми çĕрме тытăннă пулсан, ăна çийĕнчех суйласа илсе подвалтан илсе тухмала. Çав вăхăтрах çĕрулми куписен хулăмĕшне 1 метр чухлĕ çеç туса хăвармала. Подвала сивĕ кĕрет пулсан, подвал таврă улăм тата йур витсе ăшăтма кирлĕ.

Кашни колхозрах çĕрулми вăрлăхĕ мĕнле хĕл каçнине тĕрĕслесе тăмала. Çак ĕçе агрономсен те хутшăнма кирлĕ.

Агроном Г. Молостов.

Уйра йур тытаççĕ

ЕЛĔК. Александровскинчи колхоз 1938 çулти тырпул тухăçĕшĕн тăрăшса ĕçлет. Халљ колхоз 27 гектар çинче йур тытрĕ. Çаван пекех Йуçкассинчи колхоз та йур тытса хăварчĕ.

Ив. Кутузов.

Питĕшкассинчи (Елĕк р.) Войков йачĕпе тăракан колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн хатĕрленме тытăнчĕ. Колхоз çак кунсенче 65 гектар çинче йур тытса хăварчĕ. Уйа 200 лав тислĕк кăларчĕ. Тата ытти ĕçсене те тимлесех хатĕрлет. Çав хушăрах Писĕпри „Рой“, Орпашри „Хастар“ колхозсенче йур тытма тытăнман.

Степанов.

Стахановла йухăма пусараççĕ

1937 çулти 4-мĕш квартăл пĕтиччен нумай йулмарĕ. Анчах Вăрнар вăрманпромхозĕ квартăлти вăрман хатĕрлев планне тултарассипе пысăк хăрушлăх умĕнче тăрат̆. Декабĕрĕн 21-мĕшне квартăлти турттарас плана 23 процент тата хатĕрлес плана 94 процент тултарнă.

Районти хăшпĕр колхозсем вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Чăрăшкас Мăратри „11 лет Чувашия“ колхоз вăрман хатĕрлес тата турттарас плана йаланах тултарса пырат̆. Декабĕрĕн 21-мĕшне 4-мĕш квартăлти хатĕрлев планне ытлашшипех тултарнă. Халĕ турттарас плана тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Вăрманта ăмăртса лайăх ĕçлекен колхозниксем те пур. А. Иванов, М. Иванов, Кириллов, Трофимов колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Уйхир ĕçĕнче стахановла ĕçленĕ Г. Михайлов Хĕрлĕ çара кайиччен вăрманта стахановла ĕçлесе пычĕ.

Çав вăхăтрах Санарпуçĕнчи Литвинов йачĕпе тăракан, Кив Йахакассинчи Сталин йачĕпе тăракан колхозсем пайанхи куна çитсе те вăрмана тухман. Вĕсем вăрман хатĕрлес плана 30 процент çеç тултарнă.

Вăрманпромхозăн квартăл планне срукра тултарма условисем çителĕклĕ. Еç хатĕрсем: пуртăсем, пăчкăсем т. ыт. те кирлĕ таран пур. Анчах кайа йулса пынин сăлтавĕ вăрманпромхозĕнчи работниксем чиновниклерсĕ кайнинче, стахановла йухăм çине чунсăр пăхнинче. Вăрманпромхоз работникĕсем стахановла йухăма вăйлатса пырас вырăнне ăна пусарса пыраççĕ. Акă фактсем: Чернышов йертсе пыракан бригада иртнĕ çулсенче йаланах стахановла ĕçлесе пынă. Кулленхи нормăна 200—300 процент таран тултарнă. Чернышов вăрманта лайăх ĕçленĕшĕн 20 хутчен премии илнĕ.

Кăçал Чернышов бригадине ĕçлеме кирлĕ условисем туса паманнине пула унăн бригади саланса кайнă. Вăрманпромхозра стахановецсен йышĕ чакса пырат̆. Иртнĕ квартăлта 48 стахановец пулнă пулсан, халљхи вăхăтра 23 стахановец çеç шутланат̆.

Обозсенче те начар ĕçлеççĕ. Çавăнпа та Темĕтри обоз 4-мĕш квартăл планне 70 процент, Çаракăлăри—32 процент çеç тултарнă. Лучковăй пăчкăсем 175 штук пур. Вĕсем складсенчех выртаççĕ.

Ник. Козлов.
Ст. Улангай.

Çĕнĕ çула çĕнтерӳлĕн кĕтсе илетпĕр...

ВĂРНАР. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче фосфорит заводĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксен тата служăщчисен пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура Мускавпа Мускав облаçĕнчи стахановецсем чĕнсе каланине сӳтсе йаврĕç.

Пухура тухса калаçакансем суйлав умĕнхи сталинла вунăкунлăхри хăйсен ĕçĕсем çинчен тата стахановла йухăма вăйлатма чăрмантаракан çитменлĕхсем çинчен хыттăн каларĕç.

— Епĕр плана тултарассишĕн çине тăрса ĕçлетпĕр. Сменăра 40 тоннă фосфорит çăнăхĕ авăртса кăларас вырăнне 68 тоннă таран авăртса пытăмăр. Епĕ хамăн бригадăпа 1937 çулхи программăна срукчен тултаратăп. Йанвар уйăхĕнче —сталинла уйăхлăхра тата та пысăк çитĕнӳсем тума пулатăп,—тет бригадир стахановец Крышков йулташ.

Завод виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ вагонсем пулман пирки ĕçлемесĕр тăчĕ. Кунпа пĕрлех тепĕр чăрмав—фосфорит çăнăхне тултармали склада тăвассине вăрăма чăсни пулат̆. Халĕ 1937 çулхи программăна тултармали майсене туса çитерне. Фосфорит çăнăхне районсем тата колхозсем тăрăх салатма нарйадсем панă.

Пуху пĕр сасăпах çакăн пек резољуци йышăнчĕ: „Епĕр Мускав тата Мускав облаçĕнчи стахановецсем чĕннине йышăнса вĕсем çумне хутшăнатпăр. 1938 çулхи йанвар уйăхне стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ тăватпăр. Пĕтĕм вăйа хурса 1937 çулхи программăна тултаратпăр, 1938 çула çĕнĕрен çитĕнӳсем тунипе пырса кĕретпĕр. Йанвар уйăхĕнче стахановла рекордсем тума пулатпăр. Социалисăмла ăмăртува анлăн сарса, заводăн транспортне, паравозсене лайăх ремонтласа пĕтĕм 1938 çул тăршшĕпех, йанвар уйăхĕнчи пек, ĕçлеме пулатпăр“.

Иеф. Волков.

Вера Каçйанова тăвată нормă тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр. телефон тăрăх). Комбинатри стољарнăй цехра торцоваљнăй станок çинче ĕçлекен Вера Каçйанова декабĕрĕн 23-мĕшĕнче рекордлă ӳсĕм тунă. Ку кун вăл пукан ларчăкĕсем 5.904 штук, штамбиксем 500 штук тата ытти ĕçсене пурнăçа кĕртсе пĕр кунхи нормăна 416,3 процент тултарнă.

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче Буровина йулташ нормăна 340 процент тата Бучков станочник 366 процент тултарнă.

Планран иртерсе 255 тоннă тоннидă кăларнă

Çĕмĕрлери „Бољшевик“ завод коллективĕ çулталăкри плана тултарнă хыççăн çĕнĕ çулччен планран иртерсе 340 тоннă тоннидă пама пулнă.

Завод коллективĕ хăйĕн обйазателствине пурнăçа ăнăçлăн кĕртсе пырат̆. Декабĕрĕн 24-мĕшне планран иртерсе 255 тоннă тоннидă туса кăларнă. Малти ретре Лепешкинпа Тараканов бригадисем пыраççĕ.

Хамăр инфор.

Фаљсификацине хирĕç

„Красная Чувашия“ хаçат декабĕрĕн 24-мĕшĕнче „Кăтартулă сыхăлăха хирĕç“ текен статйа пичетленĕ. Çав статйара „Красная Чувашия“ хаçат „Чăваш Коммунĕ“ октабĕрĕн малтанхи кунĕсенче (и-çĕ уйăх патне кайала) Жданкин çинчен çырнисене хирĕç тă т. Паллах, „Чăваш Коммунĕ“ тĕрĕсси çинчен кăтартса панисене йышăнма йаланах хатĕр. Анчах та „Чăваш Коммунĕ“ суйса кăтартма тăнисене нихăçан та хăй çине йышăнас çук, йышăнма та пултараймаст̆.

Чăнахах та, „Красная Чувашия“ хаçат „Чăваш Коммунĕ“ редакцине айăплама мĕнле сăлтавсем тупнă-ха? Вулăр, акă мĕн çырат̆ вăл:

„Еç мĕнрен пуçланнă-ха? Жданкина çаван пек айăплама май панă сăлтав (источник) вăл халĕ тăрă шыв çине кăларнă контрреволюционер, коннăй полицире ĕçленĕ, 1912 çулта Лена çинчи рабочисене персе пăрахнă çĕрте пулнă Михайлов кăтартса панисем пулнă... Çав махровăй контрреволюционер кăтартса панисене „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцинче тата Турхан районĕнчи уйрăм работниксем тĕрĕс тесе йышăннă“.

Çапла енте, „Красная Чувашия“ Редакци „Чăваш Коммунĕ“ редакцине: вăл контрреволюционерсен материалĕсемпе усă курса таса коммуниссене варалат̆ тесе айăплама пăхат̆.

Çакна „Чăваш Коммунĕ“ нийепле те хăй çине илме пултараймаст̆.

„Чăваш Коммунĕне“ вуласа пыракансем асăрхана пулсан, „Чăваш Коммунĕ“ Жданкин çинчен çырнă чухне мĕнле материалсемпе усă курнине астăваççĕ пулмала. Вăл материалсем, пĕррĕмĕшĕнчен (октабĕрĕн 3-мĕш), комсомолăн облаçри конференци материалĕсем, вăл материалсем, иккĕмĕшĕнчен (октабĕрĕн 8-мĕш), Турхан районĕнче тухса тăракан „Коммунар“ хаçатра пичетлесе кăларнă материалсем. Çак фактсене „Красная Чувашия“ хаçат редакци нийепле те пытарса тăма пултараймаст̆.

Малала тата „Коммунар“ хаçат Жданкин çинчен 3 уйăх патне кайала çырнă. „Красная Чувашия“ хаçатăн „Коммунар“ выступленисем пирки хăй вăхăтĕнче хăй шухăшĕсене пĕлтерме вăхăт пулнă. Халĕ вăл: „Чăваш Коммунĕ“ çаплах шарламасăр тăрат̆, хăйĕн йанăшне йышăнма аван мар тесе шутлат̆“ тесе çырат̆ пулсан, „Красная Чувашия“ хаçат редакцине çакăн пек ыйту пама пулат̆: вăл хăй мĕншĕн „Коммунар“ выступлени пирки те, комсомолăн облаçри конференцинчи выступлени пирки те, вĕсене тĕрĕс мар тесе шутланă пулсан, кутăранчен шарламасăр тăнă?

„Чăваш Коммунĕ“ аллинче Жданкин пирки чылай материалсем пулнă (сăмах майĕн каласан, вăл материалсем „Красная Чувашия“ аллинче те пур). Вăл материалсем тăрăх „Чăваш Коммунĕ“, Жданкинăн, тĕрĕссипе илсен, клас тăшманĕсене пулăшакан ĕçĕсене критиклесе çапла çырнă:

„1936 çулта Жданкин Сакмаров афериса редакцине ĕçлеме илет, унăн авторитетне вĕрсе çĕклет. Вăлах троцкиссемпе çыхăннă Кузьминана редакцине ĕçлеме илет. „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцинчен хăваласа кăларса йанă Йефремова хăй патне телеграмма парса чĕнет. 1936 çултах Митта Ваçлейне чаплăн кĕтсе илет, унăн националисла сăмахне „Коммунар“ хаçатра пичетлесе кăларат̆... Стена хаçат редакторĕсен уйăхлăх курсне Жданкин тепĕр тăшмана, Михайлова, сĕтĕрсе пынă...“

Çак фактсем пирки „Красная Чувашия“ пĕр сăмах шарламасăр иртсе кайат̆. Ун вырăнне фактсене фаљсификацилеме тытăнат̆ (Краснов, Михайлов).

„Красная Чувашия“ хаçат „Чăваш Коммунĕне“ 5 çулхи ача вырăнне хурса вĕрентме тытăннă: кукăр çапни бољшевикла сыхăлăха палăртни пулмаст̆, тет. Тĕрĕс. Анчах „Красная Чувашия“, Жданкина хӳтĕлеме тăрса сахалтан та Сталин йулташ: „Пирĕн хăшпĕр йертсе пыракан йулташсем, центрта та, çаван пекех, вырăнсенче те, çав сăтăрçăсен, диверсантсен, шпионсен, çынвĕлерессен чăн сăнсăпатне курса илеймен çеç мар, вĕсем çав тери тимсĕр, йăваш чунлă тата айван пулнă пирки, урахсĕршыв патшалăхĕсен агенчĕсене, çав йе тепĕр ответлă вырăна кĕрсе кайма час-часах хăйсем пулăшнă“,—тесе кăтартнине манса кайат̆.

Çавăнпа та „Красная Чувашия“ редакцийĕ „Чăваш Коммунĕ“ редакцине: вăл махровăй контрреволюционерсем кăтартса панисемпе усă курат̆ тени, сахалтан та суйни пулат̆ тесе шутлат̆ „Чăваш Коммунĕ“.

„Красная Чувашия“ редакцинче Жданкина тӳрре кăларакан материалсем пур пулсан, вĕсене „Чăваш Коммунĕ“ йышăнма хатĕр.

7000 тенкĕлĕх хаçат-журнал сартăм

Елĕ Тутаркас районĕнчи Мăн Сĕнтĕр участкинче ĕçлекен писмоносец Пољаков 1938 çул валљи тĕрлĕрен хаçат-журналсем çичĕ пин тенкĕлĕх сартăм, хам пек ĕçлеме ытти районти писмоносецсене чĕнетĕп.

Г. Пољаков.

Пăру вити

„Осоавиахим“ колхозри (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) ĕне ферминче çамрăк пăрусене лайăх пăхса илеççĕ. Çак кунсенче колхозра 17 пăру вырнаçмалăх çутă та таса çĕнĕ вите турĕç. Пăрусене Малинина Варвара йуратса пăхат̆.

Н. Иванов.

Михаил Кољцов

Совет Украинин 20 çул тултарни

20 çул кайарах, Украина рабочисем, хресченсем, салтаксем—експлоататорсен, çĕр улпучĕсен, капиталиссен влаçне пĕтерсе совĕт влаçĕ туса хучĕç.

Çак кунран пуçласа, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, малтанах—хайар та йунлă çапăçусенче, унтан—ишĕлсе пулнă хуçалăха ура çине тăратас йĕнĕпе çине тăрса кĕрешнĕ ĕçре, малала тата социалисăм строителствин телейлĕ çулĕсенче Советлă Социалисăмлă Украина—Совет Сойузĕн уйăрăлми пайĕ—тĕлĕнмеле пуйан çĕршыв туптанса пулса тăчĕ.

Çĕнĕ ăрăва, Совет Украинин ирĕклĕ, вăйлă, çамрăк, телейлĕ граждăнĕсене хăйсен халăхĕн мĕн пек вĕçĕмсĕр асапра çук пурнăçра, мĕн пек правасăр та чурала пурнăçра пурăнма тивнине, ăна пеплĕ ĕмĕр-ĕмĕр асаплантарса пурăннине, пуйан, чечекленекен Украина çĕрĕ халăх йунĕпе шăварăннине, Российăпа Пољша улпучĕсен, патша охранкисен, палачсен, тĕрмеçчиксен, пограничниксен пуљљисемпе патакисен айне пулса вилекен Украина рабочисемпе хресченсен куççулне умĕнче хĕвел те тĕттĕмленнине тавçарса илме те йавăр. Халăх юррисенче, Украина революцийĕ аслă поечĕн—Тарас Шевченко саввисенче çак хăрушă та тискер сăмана курăнса тăрат̆.

Российă капиталисăмĕ Украина çĕрне патша самодержавин колонийĕ туса хунă. Анчах вышăхса çунакан Российа хуçисен çăварĕшĕн Украина ытла та пысăк, пăл витеймен татăк пулнă. Украина пролетариачĕпе хресченĕсене експлоатацилес, Украина çĕршывĕн пуйанлăхне експлоатацилес ĕçе йутçĕршывсенчи акционернăй обществасем хутшăннă. Российа, Германи, Пољша, Франци експлоататорĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртмала çаратнă Украина рабочисемпе хресченĕсене Донбасри шахтăсенче, Криворожйеври рудниксенче, Кийев тăрахĕнчи сахăр заводĕсенче, Вољынпе Подољи тăрахĕнчи уйхирсенче унăн вăйĕсене сăхса илнĕ.

Фабрикантсемпе улпутсен усламĕсемпе пуйанлăхĕ Украина çĕрĕ çинче ăраснах пысăк пулнă. Çавăнпа та, Украина çинче Совет влаçĕн, пролетари диктатурин хĕрлĕ йалавĕ вĕлкĕшме пуçлансан, Российăпа тĕнче капиталисăмĕ ăраснах хыттăн тулашса урма тытăннă. Çавăнпа та Украинăра граждăн вăрçи уйрăмах вăйлă пулнă, унта уйрăмах йун нумай тарах йухнă, вăрçă нумай вăхăта пынă.

Кам-кам пырса тухман пулĕ вăл çулсенче Украинана, кам-кам йарса илсе пăхăнтарма шутламан пулĕ вăл çулсенче Украина халăхне. Нимĕç çарĕсем, Францийпе Англи йанă експедици çарĕсем, шурă пољаксен çарĕсем, вĕсен сутăнчăк йытисем—Петљура-Гайдамак бандисем, Деникин, Врангел шурăгвардейцисен „çарат-çарĕсем“, махновцăсен, григорйевцăсен, тӳтӳнйĕсен хулиганла-бандитла ушкăйĕсем—вĕсем пурте Украина рабочисемпе хресченĕсен майне пусмăр майкăчĕ тăхăнтарассишĕн пулнă, ĕçчен аллисенчен татса парахнă тăлăсене каллех тăлласа лартасшăн пулнă.

Уйрăмах тискер те сĕмсĕр пулнă Украинăра Германи империалисăмĕн интервенцийĕ. Германин пысăк çарĕсем Украина хулисемпе йалĕсене пырса кĕнĕ, рабочисемпе хресченсен сахал йышлă, начар хĕçпăшалланнă отрйачĕсене хĕссе пынă. Интервентсем штык вăйĕпе карикатурлă, балаганлă „Тĕп рада“ текен правителствă туса хунă хыççăн, хăйне тара кĕрĕннĕ петљуровцăсем, германсем пулăшнипе васкасах Украинăна çаратма, Украина халăхне пĕтерме тытăннă. 1918 çулти апрелĕн 23-мĕшĕнчи обйазателствă тăрăх кăна Украина Германине 60 мĕлйун пăт тырă тăратнă. Хушса панă обйазателствă тăрăх Украинăн Германине 1917 çулхи çĕнĕ тырпулчен татах 75 мĕлйун пăт тырă, 11 мĕлйун пăт чĕрĕ выљăх, 30 пин пуç сурăх, пĕр мĕлйун пуç кайăк-кĕшĕк, 4 мĕлйун пăт сахăр, 60 пин пăт çу, уйăхсерен 200 пин пăт какай консервă, 1.500 вагон çăмарта, 2.500.000 пăт сахăр песокĕ, 20 мĕлйун литр спирт тăратмала пулнă. Кунсăр пуçне, Германи оккупанчĕсем Украинари мĕн пур вăрман тата йалхуçалăх хатĕрлевĕсене, пĕтĕм чукунçулсене, мĕн пур Донбас шахтисемпе Криворожйе рудникĕсене тытса илнĕ. Германи оккупаци çарĕн кашни салтакĕ Украина халăхне кашни уйăхра ылттăн укçа шучĕпе 9 тенке ларнă. Украинăра вăл вăхăтра 300 пин Германи салтакĕ пулнă.

Германи, Пољша тата ытти захватчиксем, Украинана пырсан, хресченсен çĕрĕсене çийĕнчен тата помещиксене тавăрттарса партарнă, парăнман йалсене вут тĕртсе çунтарса çĕрпе танлаштарса лартнă, хуласенчи плошчĕдсемпе йалсенчи çулсене çын çакса вĕлермели йупасемпе тултарса лартнă. Интервентсем Украина халăхне йунпа чыхăнтарса вĕлересшĕн пулнă, чĕркуççи çине тăратса капиталисăма парăнтарасшăн пулнă. Еç тухмарĕ. Украина ĕççыннисем, бољшевиксем йертсе пынипе, хăйсен ирĕклĕхĕшĕн, нацилĕ прависемшĕн, социалисăмлă ĕçпĕн иккĕлми кĕрешсе çĕнтерчĕç те, мĕн пур интервентсене, експлоататорсене, пусмăрçăсемпе палачсене сирпĕтсе йачĕç.

Социалисăм тăвассишĕн вăйлăн кĕрешнĕ çĕрте Украина рабочийĕсемпе хресченĕсене вырăс рабочи класĕпе вырăс хресченĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсен чи лайăх ывăлĕсем Украина халăхĕн ывăлĕсемпе сумма-сумăн тăрса шурăгвардейцсемпе интервентсене хирĕç çапăçрĕç. Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (бољшевиксен) Партийĕ çак кĕрешӳве хăйулăн, çирĕп йертсе пынă. Халăхсен аслă çулпуçĕсем, социалисăмăн аслă полководцисем Ленин тата Сталин Украинари ĕççынни массисене хăйсем хавхалантарса пынă, вĕсен кĕрешӳвĕнче хăйсен пĕтĕм вăйне, çĕнтерӳ тумали хăйсен пĕтĕм ăсталăхĕпе тимĕр пек çирĕп ирĕклĕхне панă. Вĕсем пĕр шиксĕр йертсе пынипе ĕнтĕ Украина халăхĕ, капиталисăм пусмăрлăхне йаланлăхах çĕклесе çапса, телейлĕ совет халăхĕсен тачă та тăван çемйине кĕчĕ.

Украинана чура сăнчăрĕпе тăлласа лартма тăрăшса, капиталисăмлă государствăсем хăйсен агенчĕсене, шпионĕсене, сăтăрçисене, Украина халăхĕн тăшманĕсене нумай йарса тултарнă, çав тăшмансем, ĕççерсен, петљуровцăсен, „укаписсен“, „боротбиссен“ партийĕсем çине тата ытти ушкăнсемпе шайкăсем çине пайланса, Украина ĕççыннисене вĕçĕмсĕр улталама, тăлласа лартма, вĕсене йутçĕршыв капиталĕн аллине сутма хăтланнă. Шурăгвардейцăсемпе интервентсен çарĕсене çапса салатса хăваласа кăларса йанă хыççăн та, совет Украининче социалисăм çĕнтерĕ хыççăн та пĕтерсе хунă експлоататорла класăн хӳрисем, кайашĕсем Украина халăхне сăтăр тума, социалисăм строителствине аркатма пикеннĕ.

Капиталисăмăн, реакцин, фашисăмăн мĕн пур агенчĕсенчен хăйсен тарăхувĕпе чи ирсĕр, чи урса кайнисем—Йапонипе Германи шпионĕсен тата сывĕлерессен троцкисла-бухаринла йунлă банди пулнă. Контрреволюцилĕ буржуалă националиссемпе сойуз туса, çав банда шпионаж, террор, сăтăр мечĕсемпе Украинăра ĕлĕкхи пек капиталисăмлă йĕрке туса хума, ăна Совет Сойузĕнчен татса илме хăтланнă. Кăлăхах! Граждăн вăрçин çулĕсенче Хĕрлĕ çарăн паттăр боецĕсем, Ворошилов, Буденный, Щорс пăхса ӳстернĕскерсем, Деникин, Врангел, Махно бандисене, Германипе Пољша оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкнине вĕсем манса кайнă. Совет разведки, наркомвнуделецсен мухтавлă çарĕ, унăн хастар руководителĕ сталинла Нарком Иежов йулташ троцкисла-бухаринла буржуалă националисла бандăсене, Германипе Пољшă шпионĕсен йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕç.

Ĕлĕк пусмăрта пурăннă, чухăн, кайа йулнă Украина чечекленсе кайрĕ, çирĕм çул хушшинче малта пыракан вăйлă социалисăмлă йалхуçалăхлă, хăватлă индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Хăй çирĕм çул тултарнă уйăхра совет Украинин Днепрогес, Дзержинскри металлурги завочĕ, Ново-Краматорскри Сталин йачĕпе тăракан завод, Запорожсталь, Мăкейевкăри Киров йачĕпе тăракан металлурги завочĕ, Харьковри Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактор завочĕ, Криворожйери завод пек чаплă гигантсемпе, социалисăмлă промышленнăçăн çĕнĕрен тунă тата реконструкциленĕ ытти шутсăрах нумай пĕчĕк тата пысăк предприйатийĕсемпе çитрĕ. Совет Донбасĕ ĕлĕкхи, революцийчченхи Донбасран виççĕ хут ытларах кăмрăк кăларат̆. Украинăра рабочи клас ӳсрĕ. 1913 çулта шултра промышленнăçра 642.000 рабочи пулнă. 1937 çул пуçламĕшĕ тĕлне ĕнтĕ—1.531.000 рабочине çитнĕ (Украинан пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче 5 мĕлйун рабочине йахăн). Рабочисемпе служащисен ĕçукçи пĕрмайах ӳссе пырат̆. Рабочисене коммуналă, културăпа йăла тата санитари йенчен пулăшас ĕçе государствă паракан укçа-тенкĕ ӳсет. Рабочи класăн пурнăçĕ çулран çул, уйăхран уйăха лайăхланса пырат̆.

Йалхуçалăхне коллективизацилени Украина йалне йумахри пек улăштарса çĕнетрĕ. Украина колхозникĕсем 35 мĕлйун гектар çĕре тӳлевсĕр тата ĕмĕрлĕхех илчĕç. Украина СС Республикинчи колхозсемпе совхозсен пуйан çĕрĕсене 80 пин трактор ытла сухаласа тăраççĕ. Вĕсенче 20 пин комбайн ĕçлет. Украина колхозникĕсене хăйсен аки-сухине лайăхрах туса пыма, ытларах та ытларах тырпул туса илме пиншер агрономсем, йалхуçалăх техникĕсем, полеводсем, нофересем пулăшса тăраççĕ. Ĕлĕк тĕттĕм, чухăн пулнă Украина йалĕ електричества çуттипе йалтăртатма пуçларĕ, шкулсемпе, бољницасемпе, клубсемпе, театрсемпе, ача-пăча сурĕсемпе, библиотекăсемпе илемленчĕ. Украина колхозникĕсен пурнăçĕ çутă, пуйан, савăнăçлă пулса пырат̆.

Советлă Социалисăмлă Украина калама çук чаплă çынсем—промышленнăç, çĕрĕç, транспорт, ăслăлăх, оборона геройĕсем—пăхса ӳстерчĕ. Кам пĕлмест паллă сталевар Макар Мазай йатне, йе Марийа Демченко пйатисотницăна, йе Петр Кривоносе машиниста, йе академик-исследователе Лысенкона, йе рекордсмен-летчика Полина Осипенкона? Совет Украинин ывăлĕсемпе хĕрĕсен йачĕсене хăйсен мухтавлă та хăйулă ĕçĕсемпе пĕтĕм Совет Сойузĕпе чапа тухнă çынсен йачĕсене çĕршерĕн те пиншерĕн асăнма пулат̆.

Украина културин, формипе нацилĕ, содержанийĕпе социалисăмлă културин çитĕнӳвĕсем калама çук пысăк. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Украинăра советлă ĕç интеллигенцийĕ ӳссе воспитани илчĕ. Вуншар пин инженерсем, учителсем, врачсем, çар командирĕсем, летчиксем савăнсах хăйсене Украинари совет културин питомцисем тесе калаççĕ. Патша Российĕнче украинцăсене вăл културă çинчен шухăшлама та чарнă. Литературă, театр, музыкă, живопис, кино Украина халăхĕн историнче халиччен пулманла сарăлса кайнă.

Совет културин ылттăн фондĕнче вĕсем хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çирĕм çул хушши совет влаçĕпе пурăнса Украина хăйĕн економикинче, културинче, йалара мĕн тери малала кайнине курас тесен, Хĕвеланăç Украина халљхи вăхăтра Пољша фашисăмĕн пусмăрĕнче мĕнле пурăннине аса илсен те çитет. Хĕвеланăç Украинăра чураланса пурăнакан мĕлйун-мĕлйун рабочисемпе хресченсем ĕççĕрлĕхрен, çĕр çитменнинчен, капиталиссемпе помещиксен експлоатацийĕнчен вышăхаççĕ, вилеççĕ, пĕтсе пыраççĕ. Хĕвеланăç Украинăра кашни çимĕ тахçанах пăрахнă. Унта тăвар капăр шапала шутланат̆: пĕре тăварланă шывпа темиçе хутчен çĕрулми пĕçереççĕ. Йалхуçалăх продукчĕсен хакĕсем çав те-

Совет работникĕсене заочнă вĕрентесси çинчен

Сталин йулташ ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн февраль-март уйăхĕнче пулнă пленумĕнче кадрсем пирки ыйтăва питех те çивĕч лартрĕ.

„Техникăна алла илесси çинчен калакан кивĕ лозунг çумне, шахта тапхăрне тивĕçлĕ пулнă лозунг çумне, халĕхи тапхăрта пит те тивĕçлĕ çĕнĕ лозунг, кадрсене политикăлă воспитани парасси çинчен, большевизмпа аврăланасси тата пирĕн политикăла шанăçлăха пĕтересси çинчен калакан лозунг хушмала", тенĕ Сталин йулташ çав пленумра.

Сталин йулташăн çак ыттăн сăмахĕсем кадрсене хатĕрлес ĕçре пысăк программă пулса тăраççĕ. Совет работникĕсем социализм строительствин пур участокĕсенче те, хулара та, йалта та ответлă руководителсем тата организаторсем пулса тăраççĕ.

Рабочисен тата колхозниксен культурлăхĕ, çавăнпа пĕрлех вĕсен политикăла активлăхĕ кунран кун ÿссе пырат. Иртнĕ 20 çул хушшинче пирĕн хуласен тата йалсен сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Социализмла промышленлăх хулисем çĕршерĕн ÿсрĕç. Йал çĕнелчĕ. Пирĕн колхозсем пĕрремĕш класла йалхуçалăх техникипе хĕçпăшалланчĕç (тракторсемпе, комбайнсемпе, автомашинăсемпе, електричествăпа т. ыт. те), йалсенче йалхуçалăх астасĕсем, интеллигенци тата стахановецсем çĕршерĕн хутшăнчĕç.

Çаксем вĕсем пурте совет работникĕсене хăйсен ĕçĕн пахалăхне хăпартма тата большевиклатма хушаççĕ. Сталин йулташ капиталисăмла йĕри-таврăлăх çинчен асăрхаттарнине нихăçан та, пĕр минутлăха та, манăçа хăварма йурамаст. Халăх тăшманĕсем—сăтăрçăсем, диверсантсем, троцкисем, бухаринсем тата буржуйла националисем, тискер фашиссене сутăнискерсем—хăшпĕр работникĕсен политикăла тимсĕрлĕхĕпе усă курса, социализм строительствин чылай участокĕсене сăтăрла ĕçре турĕç. Халь кадрсене хатĕрлесси, вĕсене политикăла воспитани парасси тата вĕсен большевикла сыхăлăхне ÿстерме пулăшасси—райĕçтăвкомсен ĕçĕнче чи кирли, чи пысăкки пулса тăрат.

Совет кадрĕсене хатĕрлес ĕçре заочнă вĕренесси пысăк тата хисеплĕ вырăн йышăнса тăрат. Кун пирки ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ хăйĕн паллă „решенинче"—заочнă вĕренессине сарса пырасси политикăла тата государствăлла пысăк ĕç пулса тăрат" тенĕ. Заочнă вĕренсе пысăк пĕлÿ илесси шкулсенче вĕреннĕ пекех пĕлтерĕшлĕ, йуне ларăт тата вĕренекен кашни кунах практикăла ĕçре пулат.

Çапла пулин те, совет работникĕсене заочнă вĕрентес ĕçе 1937 çулччен манăçа хăварнă. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетĕнче те ку ĕç хисепре пулман. Заочнă вĕренес ĕçе йĕркелекен çын Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетĕнче оргпайĕнче пулман, пулнисем çак кирлĕ ĕçе туса пыман. Çавна пула ĕнтĕ, 1936 çулта 170 заочнă вĕренекенсенчен 14 çын кăна вĕренсе тухнă. 1935 çулччен пĕр çын та вĕренсе вĕренмен.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕ йышăннă тăрăх кăçалхи çул заочниксене 11 район тăрăх массăлă отделение 200 çын, икĕ çул вĕренмели отделение 25 çын илмелле пулнă. Халĕ массăлă отделение 190 çын, икĕ çул вĕренмели отделение 17 çын илнĕ. Вĕренме илнĕ заочниксен шутĕнче хĕрарăмсем 11, ПСК(б)П членĕсемпе кандидачĕсем 18, ПССЛКС членĕсем 42, йалсовет председателĕсемпе заместителĕсем 50, райĕçтăвком работникĕсем 18 çын.

Заочниксене пухса кашни районах уйрăмăн 41 кунлă консультаци иртерчĕ. Консультацисем тата конференцисем иртерме кашни район çумне Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кадрсемпе ĕçлекен секторĕн инструкторĕсене çирĕплетнĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа заочниксем 320 контроллĕ çыру ĕçĕсем тăратнă. Вĕсенчен „отлично" палласемпе 17 проц., „хорошо"—33 проц., „посредственно"—50 процент. Елĕк тата Тутаркас районĕнчи заочниксем лайăх паллăсемпе вĕренеççĕ. Отлично вĕренсе пыракансем ответлă ĕçсенче ĕçлеме çитĕнсе пыраççĕ. Шордаваш йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Никитин йулташ (Çĕрпÿ р.) халĕ районра социаллă пулăшу йенĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлет, Йанкасси йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Плотников йулташ (Çĕрпÿ р.) халĕ райĕçтăвкомăн кадрсемпе ĕçлекен сектор пуçлăхĕнче ĕçлет, т. ыт. те.

Райĕçтăвкомсен ответлăхĕсем пула массăлă отделенинчен 49 заочник, 2 çул вĕренмели отделенинчен 4 заочник вĕренме пăрахрĕç. Патăрйел районĕнчи заочниксенчен 50 процент, Куславкка районĕнчен 45, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Елĕк—39—35 процент вĕренме пăрахнă. Заочниксенчен нумайăшĕ тимлĕн вĕренмеççĕ. Йĕтĕрне районĕнчи заочниксенчен пĕри те „отлично" паллă илмен. Заочнă вĕренес ĕçе Çĕрпÿ райĕçтăвкомĕ тата унăн председателĕ Павлов йулташ кăна лайăх йĕркеленĕ. Çавăнпа та Çĕрпÿ районĕнче вĕренме пăрахнисен шучĕ те сахал.

Вĕренÿ çулĕ вĕçленсе пырат, 1937 çул илнĕ заочниксене пурне те вĕрентсе кăлармала. Анчах райĕçтăвкомсен кадрсемпе ĕçлекен секторсен пуçлăхĕсем райанхи кунна кадрсене хатĕрлес, вĕсене политикăла воспитани парас тĕлĕшпе пĕлтерĕшлĕ ĕçлемеççĕ. Кадрсене хатĕрлес ĕç—райĕçтăвкомсен ĕçĕнче чи кирли, чи пысăкки пулса тăнине йăланса илме вăхăт ĕнтĕ.

Районри учрежденисен тата йал совет работникĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухса, халăх тăшманĕсенчен тата вĕсене хÿтĕлекенсенчен тасатасси, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн йуратса пурнăçласа пыракан, политикăпа моралĕ тĕлĕшĕнчен çирĕп, партири тата партире мар большевиксене кÿлленех большевисăмна вĕрентсе, политикăла воспитани парасси—райĕçтăвомсен чи хисеплĕ ĕçĕ.

В. Соколов.

Республикăра малти вырăншăн тăрăшатпăр

Шупашкар хулинчи финанс активĕ ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йавнă хыççăн, тата ĕççыннисен пысăк уйавне—суйлав кунне хатĕрленнĕ май финанс планĕн пĕтĕм тÿлевĕсене срукченех тултарма обиазателства илчĕ.

Çак обиазателствă хут çинче кăна йулмарĕ. Хула финанс планне декабĕрĕн 12-мĕшĕнче тултарчĕ. План тăрăх 1.160.000 тенкĕ пухмала пулнă пулсан, халĕ пĕтĕмпе 1.200.000 тенкĕ пухнă, плана 108 процент тултарнă. Вăл шутран: налогсем—113,2 процент, займпа вкладсем—103,1 процент, страхованисем—129,7 процент (пурнăçа ирĕккĕн страхлассипе 173 процент, пурлăха ирĕклĕн страхлассипе 210 процент) тултарнă.

Финанс планне срукченех тултарас тĕлĕшпе хĕрарăмсем питĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. „ССРС оборонине тĕреклетмели займ" укçине пухас тĕлĕшпе Кириллова, Соколова (Роза Люксембург урамĕ тăрăх), Макарова, Мочалова, Плохова (Калинин тата Комсомольская урамсем тăрăх), Смирнова, Осипова, Макарова (Ленинградская урамĕ тăрăх), Антонова, Седова (Заводская урамĕ тăрăх), Собачова (Кадыкова урамĕ тăрăх), Прийателев (Володарский урамĕ тăрăх) тата ыттисем те хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем çав урамсем тăрăх займ укçине пухса пĕтерчĕç. Çавăн пекех 10-мĕш тата 1-мĕш ЖАКТ-сем те плана тултарчĕç.

1937 çулхи пĕтĕм кварталсен планĕсене анăçлăн тултарса пынипе хула совечĕн бÿджечĕ 11 уйăх хушшинчи планне 97 процент тултарнă. Çакнашал ĕçленипе учителсене, медицина работникĕсене тата хула советне пахăнса тăракан предприйатисенчи рабочисене, учреждениесенче ĕçлекенсене йаланах вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех ĕç укçине парса пыма май пулчĕ. Социаллă-культурăлă, коммуналлă строителствăна тата благоустройствăна вăхăтра укçа-тенкĕ парса тăнă.

Сталинла иккĕмĕш пйатилеткăна анăçлăн вĕçлесе, хулари финанс активĕ сталинла виççĕмĕш пйатилеткăна пысăк çĕнтерÿсемпе кĕтсе илет, парти организаци йертсе пынипе, хăйĕн ĕçĕнче татах та пысăк çĕнтерÿсем тăват.

Шупашкар хула совечĕн финанс пайĕн коллективĕ Мускав предприйатийĕсенчи стахановецсем чĕнсе каланине ырласа тата ССРС Аслă Совечĕн пĕрремĕш çеççине пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тĕлĕшпе çакăн пек обиазателствăсем илет:

1938 çулăн пĕрремĕш уйăхне финанс ĕçĕпе „отлично" ĕçлемели уйăх тăватпăр;

Йанварĕн 1-мĕшне, ударниксен кунĕ тĕлне, бÿджетпа финанс планĕн пĕтĕм заданийĕсене, уйрăмах государствă дохочĕ тăрăх, тултаратпăр;

Финанс активĕпе—финанс секци членĕсемпе, хĕрарăм финанс активĕсемпе лайăх ĕçлеме, финанс—контроллĕ постсене лайăх йертсе пыма, займ тата страховани укçисене пухакан уполномоченнăйсене кулленех пулăшса пыма пулатпăр;

Хула совечĕ çумĕнчи финсекци ĕçне предприйатисенчи рабочисене, килхуçи хĕрарăмсене, счетоводсене татах та ытларах хутшăнтарма пулатпăр.

Шупашкар хула совечĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ И. Золотников.

Избачсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи вулав çурт пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта мĕн пурĕ 27 çын пухăннă. Канашлура суйлав итогĕсемпе йалти культурăлă-массăлă ĕçе тата лайăхрах йĕркелесе йарасси çинчен сÿтсе-йаврĕç.

Районра чылай избачсем суйлав кампанинче ĕçлесе хăйсен чăн-чăн пултарулăхĕсене кăтартрĕç.

Халĕ çав çитĕнÿсене çирĕплетмеле, суйлав кампанинче тунă ĕç опычĕсене малала сарса пымала.

Вулав çурчĕсен, йалти культработниксен, избачсен ĕçĕ пуринчен ытларах çамрăксен художествăлă пултарулăхне йĕркелес тĕлĕшпе анăçлăн пырат. Кашни вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем—драмă, хор кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Уйпуçĕнчи вулав çурчĕ çумĕнчи драмкружок кăçал 18 спектакль лартса пачĕ. Спектакльсем лартма кунти çамрăксем таврари йалсене те тухса çÿреççĕ.

Чылай çĕрте кăçал турăçăрсен кружокĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Кружоксенче лекцисем, беседăсем пулса иртеççĕ.

Мăн Йамашри вулав çурчĕ çак кунсенче радио илчĕ. Колхозниксем пушă вăхăтсенче ушкăнпа пухăнса радио итлеççĕ.

Вулав çурчĕсен ĕçĕнче справкăсем паракан сĕтелсем паха вырăн йышăнса тăраççĕ. Ку çĕнĕ ĕç кăçал районĕпех сарăлчĕ. Тĕрлĕрен ыйтусемпе справкăсем паракан сĕтелсем лайăх ĕçленипе вулав çурчĕсенчен халăх татăлмаст.

Кăçал районта çĕнĕрен 3 колхоз клубĕ, 1 вулав çурчĕ уçăлчĕ.

Канашлу ĕçри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене кăтартса парса, выранти культработниксене, агитаторсене тата лайăхрах ĕçлеме чĕнчĕ.

Е. Çамарин.

Колхозри библиотекă

ЙЕТĔРНЕ. Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхоз библиотеки кăçал уйрăмах лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Петр Гаврилов колхозник библиотекăр пулса ĕçлет, вăл тăрăшнипе кăçал çĕнĕ кĕнекесем нумай туйанна. Библиотекăран кĕнеке илсе вулакансен шучĕ те ÿсех пырат.

А. Соловйов.

Н. Островскине асăнса

Писател-орденоносец Николай Островский вилни çулталăк тултарнине асăнса, Шупашкарти кооптехникум студенчĕсем декабĕрĕн 23-мĕшĕнче вечĕр туса иртерчĕç. Вечĕрта Н. Островский пултарулăхĕ çинчен доклад пулчĕ.

Е. Йегоров.

Парторганизацисен чи ответлă ĕçĕ

Пирĕн малта пыракан, социалисăм ĕçĕшĕн, партипе халăх ĕçĕшĕн чунтан тăрăшса ĕçлекен, халăх тăшманĕсене хирĕç хайарăн кĕрешекен çынсем кашни предприйатире, колхозра, учреждепире, шкулра темĕн чулах. Вĕсен, партире таман большевиксен, йышĕ куллен-кун ÿссе пырат. Партин Тĕп Комитечĕ парти ретне çĕнĕрен илмеле туни, çак активиссене большевиксен парти ретне илесси çинчен калат те ĕнтĕ.

Парти чĕрĕ органисăм, вăл ăнсăртран кĕнĕ, йута, тăшманла етемсенчен тасалат, çав вăхăтрах вăл хăйĕн хушшине лайăх ĕçлекен, малта пыракан, чи малтан рабочи класран, ĕççыннисенчен çĕнĕ çынсем илсе хутшăнат. Анчах политикă йенчен тÿрĕ, производствăра лайăх ĕçлекен, обшчествăлă пурнăçра активлă ĕçлекене партине илес, парти кандидатĕнчен члена куçарас ĕç партин чылай организацисенче начар тăрат. Çакнашкал организацисен шутне Шупашкар хулинчи чылай пуçламĕш организацисем кĕреççĕ. Хула организацинче партине илес, кандидатран члена куçарас ĕç питех те çителĕксĕр тăрат. Акă фактсем. Парти Тĕпкомĕ парти ретне çĕнĕрен илме йышăннăран вара çулталăк иртнĕ вăхăтра Типографинчи, спирт заводĕнчи, йалхуçалăх институтĕнчи, пединститутри, Çутĕç халăх коммиссариатĕнчи парторганизацисем пĕр çынна парти ретне илмен. Çав организацисенче партине илме йурăхлă çынсем çук-ши вара? Мăсăран пачах уйăрăлса кайнă çын çеç партине илме йурăхлă çын çук тесе калама пултарат. Парторганизацисем Тĕп Комитет постановление пурнăçа кĕртес тесе çине тăрса ĕçленĕ пулсан, партине илме тивĕçлĕ çынсем, халĕ парти ретĕнче пулмала. Анчах парторганизацисем хăйсене ĕçлеме канлĕрех пултăр тесе, парти речĕсене çĕнĕ вăй илессине хупă алăк умĕнче тытса тăраççĕ.

Пединститутра партине илес ĕçе йури чăрмантараççĕ. Комсомолец Ляшко йулташ институтри паллă активист. Вăл институтра халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе вăй-хала хурса ĕçлет. Ляшко йулташ партине кĕме заявлени панă. Рекомендацисем те çителĕклĕ. Анчах унăн заявленине 4 уйăх хушши пăхса тухмасăр выртараççĕ. Сăлтавĕ мĕнре? Парти хула комитечĕн инструкторĕ Лапин йулташ каланă тăрăх, Ляшко институт руководителĕсене критикленĕ хыççăнах, унăн заявленине пăхса тухас ыйту кун йĕркинчен тухса ÿкнĕ. Ку ĕнтĕ куçа-кĕретĕнех партине хирĕçле ĕç туни пулат. Хула комитечĕ хăй те çак киревсĕр ĕçе пĕтерме тивĕçлĕ ĕçсем туман.

Парти резервисем—комсомолецсем, сочувствуйушчисем, активиссем. Вĕсем хушшинче партине кĕресшĕн çунакансем сахал мар. Суйлав вăхăтĕнче стройтрестра 4 çын, макарон фабрикĕнче 4 çын партине кĕме заявленисем панă. Анчах пĕтĕм ĕç—рекомендацисем çитменнинче тăрат.

— Андрейевпа Котелников фабрикри лайăх ĕçлекен çынсем, активиссем, политикă йенчен тÿрĕ, шанчăклă. Партине илме йурăхлă. Анчах рекомендацисем çителĕклĕ тупаймаççĕ.

— Есĕ ху мĕншĕн памастăн тесе ыйтсан, макарон фабрикĕнчи парторг Мамакин йулташ нимĕн те каламаст. Çакă ĕнтĕ вăл кайран-малтан мĕнте пулин сиксе тухĕ тесе хăй пĕлекен, партире тăма тивĕçлĕ çынсенех рекомендаци памасăр тăни пулат. Мамакин Андрейевпа Котелников ĕçĕсене, вĕсем мĕнле çынне пĕлет, партине илме те йурăхлă тет, анчах рекомендаци пама иккĕленет. Çапла иккĕленсе, хăраса тăракансем парти ретне ÿсме чарса тăраççĕ те ĕнтĕ.

Çакăн пекех йалхуçалăх институтĕнче те партком секретарĕн заместителĕ Салмин йулташ партине илме йурăхлă çынсен йачĕсене нумай илсе кăтартат. Анчах ĕç мĕн çинче чарăнса тăрат, партине кĕресшĕн çунакан çынсем мĕншĕн кĕреймеççĕ тесен: каллех, рекомендацисем çук тесе ответлет. Рекомендаци çук сăлтавпа партине илмесĕр тăни тĕрĕс мар. Ку вăл парти организацисем парти ретне çĕнĕ вăйсем хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн тумасăр ларнине витмели сăлтав çеç. Парторганизаци тăрăшса ĕçленĕ çĕрте рекомендаци паракансем те пур. Акă стройтрестра çак йулашки уйăхсенче икĕ çынна партине илнĕ. Анчах вĕсене хула комитечĕ икĕ уйăх çитет пулин те, çирĕплетмен-ха.

Парти ретне çĕнĕ вăй илес ĕçе организациленĕ чухне чăрмавсем сахал мар. Шупашкар хула комитетĕнче ĕçлекенсем хăйсем çителĕксĕр ĕçленине йышăнаççĕ. Анчах вĕсем парти Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕ (ОРПО) начар ĕçленине пула партине çĕнĕрен илес ĕç питĕ хуллен пынине кăтартаççĕ. Чăнах та, хула комитечĕ кăçал чылай çынна парти ретне илнĕ. Анчах вĕсенчен нумайĕшĕ ку тарана çитсе те парти документĕсене илеймен. Мĕншĕн тесен, парти Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕ çĕнĕрен партине илни çинчен хула комитечĕ йанă материалсене нумай вăхăт хушши тытса тăрат. Акă, хула комитечĕ 1937 çулти ийуль уйăхĕнче Степанов, Лаврентйев, Клементйев, Ситулин, Краснийа, Петров тата ытти йулташсене партине илнĕ. Материалсене парти Обкомне тăратнă. Анчах Обком çав материалсене халĕ те пăхса тухман.

Хулари организацисенче парти йышне çĕнĕ вăйпа ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçленине çак факт та лайăх кăтартса парат. Суйлав кампани вăхăтĕнче сочувствуйушчисем хушшинче ĕçленĕ. Вĕсене суйлав саккунне вĕрентес ĕçе йавăçтарнă, агитаторсем тунă. Анчах халĕ вĕсем хушшинче ĕçлени çук. Чылай организацисенче (промсойуз, йалхуçалăх институчĕ) сочувствуйушчисем парти йышне çĕнĕ вăйпа тултармали резервă пулнине ăнланмаççĕ.

Партине илесси халĕ чи ответлă ĕç. Парти организацисен ку ĕçре питĕ тимлĕн ĕçлемеле. Анчах та кунта сыхă пулмала, парти ретне илекен çынна пур йенчен те тĕплĕн тĕрĕслемеле, пĕлмеле. Парти организацийĕсем партире таман массăсемпе тачă çыхăнсан, суйлав вăхăтĕнче çекленнĕ çĕнĕ агитаторсемпе тачă çыхăнсан, партине кĕме тăрăшакан çынсем çине тимлĕн пăхсан, вĕсене вĕрентсе пырсан, парти ретне çĕнĕ вăйпа хутшăнтарма пултараççĕ.

ри йунелсе кайнă, пĕр литр сĕтшĕн пĕр коробкă спичкă çеç илме пулат. Чухăн хресченсем кашни спичкă шăрпăкне çурса виçĕ пайа уйăраççĕ.

Польшă шовинисĕсем Украинă кĕнекисемпе, хаçачĕсемпе, театрсемпе, вывескăсемпе, шкулсемпе усă курма чараççĕ—5 мĕлйун украинец пурăнакан Польшăра украинцăсем валли 129 пуçламĕш шкул çеç усă—вăл Совет Украинин пĕр-пĕр районĕнчинчен те сахалрах. Польшă влаçĕсем „Украина" текен сăмаха та калама чараççĕ. Вĕсем ĕлĕк ыраççен великодержавлă шовинисĕсем Украинăна Малороссии тесе йат панă пек, хĕвеланăç Украинăна Малопольшă тесе чĕнеççĕ...

Пайан совет Украина халăхĕ иртнĕ çулсем çине, 20 çул хушши кĕрешсе тата ĕçлесе иртернĕ çул çине аслă та саккунлă мухтавпа çаврăнса пăхат. Мĕн чухлĕ чăрмавсем сирсе йанă, мĕн чухлĕ крепăçсем илнĕ, мĕн чухлĕ тăшмансене çапса аркатнă!

Чăнах та, тăшмансем халь хĕçпăшалсене пăрахса хуман-ха. Вĕсем халь те Украинăн чечекленекен уйхирĕсене вăрçăпа туртса илме, хăватлă социалисăмлă индустрине тытса илме, Украинăна Германи йе Польшă колонийĕ туса хума, „Малопольшă", „Малогермани" туса хума ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем Совет Украинине хăйсен агенчĕсене, фашисла шпионсене, диверсантсене, сăтăрçăсене, троцкисла-бухаринла террориссене йараççĕ. Вĕсем хăйсен ирсĕр аллисене чикĕ урлă йама, Украинăри рабочин, колхозникăн, интеллигентăн мирлĕ ĕçне, телейлĕ лăпкă пурнăçне пăсма хăтланаççĕ.

Анчах тăшманăн çав мĕн пур хăтланăвĕсем, мĕн пур усал ĕçĕсемпе ĕмĕчĕсем арканса кайма пÿрнĕскерсем. Çĕршыв тулашĕнчи тата çĕршыв ăшĕнчи кирек мĕнле хăрушлăхран та аслă Сталин çивчĕ сыхлакан Украинă халăхĕ тăшмансене палласа илме тата сыхăлăх пулма вĕренсе çитрĕ.

Совет чиккисен хуралĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тимĕр стена пек çирĕп тăрат. Тăшман совет Украинин чиккисем урлă ура йарса пусма хăйсан, Хĕрлĕ Çар ăна сирсе пăрахат, тата агрессора хăйĕн территорийĕ çинчех пĕтерсе хурат.

Мĕн пур ĕççыннисем, социалисăмлă тăван çĕршывăн мĕн пур патриочĕсем йуратса пулăшса, тăракан совет влаçĕн карательнăй органĕсем Совет Сойузĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕ çине, моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ çине, Украина Советлă Социалисăмлă Республикĕн социалисăмлă харпăрлăхĕ çине алă çĕклеме хăйу çитерекен кирек мĕнле тăшмана та пĕр самантрах пуçăрласа тăкĕç.

Социалисăм строителствин çирĕм çулĕ хушшинче кĕрешсе илнисене тĕреклетес тата сыхлас ирĕк-кăмăла Украина халăхĕ хăйĕн йубилейĕ умĕн усăн кăтартса пачĕ. Етемлĕх историнчи аслăран та аслă документа—Сталинла Конституцие, ирĕклĕ совет халăхĕсен права хартине Украинă ĕççыннисем хĕпĕртесе те хастарлăн йышăнчĕç. Украинăри суйлавçăсем Аслă Совет суйлавне пĕр шухăшлăн, активлăн, савăнăçлăн кайрĕç те, пурте пĕр çын пек кар тăрса коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла халăх блокĕ тăратнă кандидатсемпĕн сасăларĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă чух Украина сасăлани, пĕтĕм Совет Сойузĕ сасăланă пекех, социалисăмлă çĕршывăн мĕлйун-мĕлйун массисем хăйсен обшчествăлă стройне хакланине, хăйсен тăван çĕршывне йуратнине, вĕсем хăйсен телейĕн тимĕрçне, совет каранĕн аслă кормчийне, шанчăклă тусне, учителне, мĕн пур халăхсен, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе пусмăрта пурăнакансен çулпуçне, Сталин йулташа, йуратса тавтунине кăтартса пачĕ. Совет Украинин çирĕм çулхи йубилейĕ вăл—унăн ăсĕ, унăн çирĕплĕхĕ, унăн генилĕ руководствин çĕнĕрен чаплă çĕнтерÿ тунипулат.

Йа. Викторов

Тĕнчери лару-тăру

Йапони çарĕсем вăйлăн тапăнса пыраççĕ пулин те, Китайра вăрçă вăрçасси пĕрре те Йапони командованийĕ шутланă пек саралса пымаст. Шанхайа тыта Нанкина йарса илнĕ пулин те, Йапони захватчикĕсем хăйсен тĕп тĕллевĕ патне çитеймен: Китай правителствине чĕркуççи çине лартайман, ăна Йапони çĕнекен „мир" условисене, урăхла каласан, Китайа йăлтах хăйĕн пусмăрĕ айне туса хурас условисене йышăнтарайман. Китай халăхĕ хирĕç тăрасси ÿссе саралсах пырат; Йапонийе хирĕçле хăватлă йухăм пĕтĕм çĕршыва çаврăнса илнĕ.

Нумайран та икĕ уйăх хушшинче тăвата дивизипе Çурçĕр Китайа тытса илме пулат, тесе шутланă йапонцăсем. Шанхай патĕнчи авантюрă валли икĕ дивизи „ассигнациленĕ" пулнă. Практикăра мĕн пулса тăчĕ-ха? Икĕ уйăх иртни нумай пулат, анчах йапонцăсене Ази материкне мĕлйунран кайа мар салтак кусарма лекрĕ.

Йапони командованийĕ шутласа хунисем пур те кутăн-пуçăн тăрăнса ÿкрĕç.

Китай парăнма шутламаст. Йăлтах урăхла, вăл хирĕç тăрассине çаплах вăйлатса пырат. Китай командованийĕ йапонцăсем çар техникипе авиаци тĕлĕшĕнчен вăйлăраххине тĕплĕн шута илет, çавна май Йапони захватчикĕсене хирĕç оборонă кĕрешÿне организацилет. Китай çарĕсем йапонцăсене хирĕç хытă тăраççĕ. Çав хирĕç тăрасси мĕн чухлĕ вăйлине çакăнтан та курса илме пулат: Йапони çарĕсем йулашки кунсенче пĕр Нанкин патĕнчех 6.000 çын ытла сухатнă. Китай çарĕ чакса пырат, план тăрăх чакса пырат. Анчах ăна çĕмĕрсе тăкман. Чăннипе вăл пĕрре те хытă айа пулман тата хăйĕн тĕп çар вăйĕсене çимĕн те сухатман.

Йапонцăсем тытса илнĕ районсенче партизанла йухăм вăйланнă çемĕн вăйланса пырат. Партизансем Бейпинпа Таньцзинь районĕнче кĕрешеççĕ. Вĕсем Бейпинпа Ханькоу хушшинчи пĕтĕм чукунçул тăрăх, Калгапа Тайуань хушшинчи чукунçул тăрăх, Танцзинпе Пукоу хушшинчи чукунçул районĕнче кĕрешеççĕ. Пĕр Çурçĕр Китайрах партизансен йышĕ çĕр пин çынран иртет.

Тата çакна та хисепе илмеле: Йапони Китай çине тапăнса кĕнĕ май йулашки вăхăтра Манчжурире партизанла йухăм вăйланса кайнă. Манчжурире кĕрешекен партизан отрйачĕсенче 80 пин çын тăрат.

Йапонцăсем хăйсем тытса илнĕ районсенче управлени аппаратне те йĕркелеме пултараймаççинчен мĕн тĕлĕнмели пур ĕнтĕ. Йапонцăсен йăвăрлăхĕсем ÿссех пыраççĕ, ÿссе пырĕç те. „Токиори аслă рах пуççем,—тесе çырат Лондонри „Економис".—Йапони çине çав тери хăвăрт капланса килекен вĕçĕмсĕр йăвăрлăхĕсем çине пăшăрханмасăр пăхма пултараймаççĕ".

Çав „вĕçĕмсĕр йăвăрлăхсем" ĕнтĕ Йапони агрессорĕсем ниçта кайса кĕме пĕлмен пек аптăраннин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрат. Йапони захватчикĕсем, тытас тени алла ÿкменнине курарсах кайнă тискер кайăк пек, тискеррĕн асат. Вăл Китайа кăна мар Китайра интерес пур империалисăмлă ытти державăсене те шута хумаст.

Йапонцăсем Шанхайри пĕтĕм тĕнче сеттльментĕнче хуçа пулса пурăнни те сахал-ха. Вĕсем тата Америкăн, Англин карапĕсене переççĕ. Переççĕ те, касарма ыйтаççĕ, анчах хăйсен тактикине улăштармаççĕ.

Йапони империалисĕсен Китайри ĕçĕсем йар-уççăн çакăн çине кăтартса параççĕ: Йапони империалисăмĕ Китайа йăлтах пусмăр айне туса хурасшăн та унта пĕр-пĕччен хуçа пулса тăрасшăн.

Йапони политики Англин тата Америкăн Пĕрлешÿлĕ Штачĕсен пурнăç интересĕсем тăрăх çапни ахалех лайăх курăнат. Анчах çав державăсен, чи малтан Англин, позицийĕ, вĕсем Йапони агрессине хирĕç мĕн чухлĕ те пулин паллăрах мелсем йышăнма шутлани çинчен каламаст. Пĕрлешÿлĕ штатсенче изоляционис текенĕсен влийанийĕ чылай вăйлă пулмала. Вĕсем, кирек мĕнле агрессирен те „нейтралитет" текен вывескă хÿттине пытанса йулма пулат, тесе шутлаççĕ. Англи ĕнтĕ мĕн ку тарăнчченех Китай ĕнен çинче Йапони захватчикĕсемпе калаçса татăлма пулат текен шанчăка пăрахмаççĕ. Кĕскен каласан, буржуалă-демократилĕ державăсем Китайра та, Испанири пекех, „хутшăнмала мар" текен политикăпах тытса пыраççĕ. Çав политикă Испанире мĕнле кичем йата тухни пурне те паллă.

„Хутшăнмала мар" политикă, тĕрĕсрех каласан,—агрессине пилес политикă, паллах, вăрçă чĕртекенсене, мирлĕ пурнăçа аркатса тăкса пĕтĕм тĕнче вăрçи пуçласа йарас йенпе хăйсен ĕçне вăйлатса пыракансене çеç хавхалантарат. Агрессорсем дипломати йенĕпе мĕнле хастаррăн ĕçленине Франци йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Делбос Йеврошă тăрăх çÿренĕ чухне аван курма пулатчĕ.

Франци министрĕн ĕçĕ,—Тĕп тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Йевропăри государствăсемпе, Францие сойузлă тăракан тата Франци хăрушăсăрлăх текен системине кĕрекен государствăсемпе çыхăнăва çирĕплетессинче пулнă. Делбос Варшавăра, Бухарестра, Белградра тата Прагăра пулнă.

Делбос çÿренин, вăл Варшавăра, Бухарестра, Белградра каласнин итогĕсем мĕнле-ха? Аса илтермĕ йурат, 1935 çулта Польшă та, Румыни те, Йугослави те Лига наци решенийĕсем никĕçĕ çинче Италие хирĕç тунă санкцисене хутшăннă. Çав виççĕ государствă 1935 çулта мĕнле позици йышăннă, халĕ те çавăн пек позицийех йышăнассине ĕненекен айван çын тупăнас çук халĕ. Делбос Варшавăра тата Белградра калаçни çинчен официаллă пĕлтернисенче Лигă наци çинчен, çавăн пекех коллективлă хăрушăсăрлăх çинчен асăнмани те çителĕклĕ паллă пулса тăрат.

Франци пичечĕ хăй сырса пĕлтернĕ тăрăх, Франци министрĕн Варшавăри ĕçĕсем кусĕрет анăçлăн пулман. Полковник Бек, Германи фашисăмĕн чăн агенчĕ, Польшă Германи йенне сулăнма пăрахас сукине питех те усăн систернĕ. Унтан та ытларах, Бек Германи фашисăмĕн адвокачĕ пулса, Германин колонилĕ требованисен хутне кĕнĕ. Шанчăклă комиссионер пулса, Бек Делбоса Берлина кайма сĕннĕ, ку ĕçре ăна пулăшма пулнă. Делбос Польшăпа Чехословаки хушшинчи хутшăнăва лайăхлатма сĕннипе Бек татăклăн сивлесе тăнă. Францие Польшă хушшинчи калаçăвра пуçару Франци министрĕн аллинчен вĕçерĕннĕ. Калаçу çинчен официаллă пĕлтернинче Лига наци çинчен асăнмани Бек мар, Делбос уступкă туни çинчен пĕлтерет.

Бухарестра Делбосшăн кăшт анăçларах пулнă. Анчах кĕтсе илнĕ. Анчах апла пулин те, йут çĕршыв пичечĕ Францин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Румыни корольне Кароля Германи майла политикăран сулăнтарма пултарайнă-ши, тесе иккĕленсе тăрат.

Франци министрĕн Йугославире те уйрăмах паллă анăçу пулайман. Йугослави министрĕ Стойадинович Делбос парачченех Римра пулма ĕлкĕрнĕскер (халь Берлина кайма пуçтарăнат). Йугославипе Итали çыхăрни акăн факт тата малашне те çав йенпе ĕçлесе пырăпăр, тесе каланă. Чăн та, Стойадинович Франко генерала йышăнас ыйтăвра сыхланарах пыма тата виçĕ агрессорăн блокĕ çумне хутшăнмала мар сăмах панă. Анчах çав ыйтусене çапла хускатса лартни икĕ сойузник хушшинчи калаçăвра питех те паллă пулса тăрат, мĕншĕн тесен виçĕ агрессор блокĕ Францие хирĕç питĕ çивĕч тăрат.

(Пулашки 4-мĕш страницăра).

Совет Украини 20 çул тултарни

Ворошилов йулташ Донбас рабочийĕсем патне йанă воззвани

ХАЙАР СЕХЕТ ÇИТСЕ ТĂЧĔ! НИМĔÇ ШУРГВАРДЕЙЦИСЕМ, ÇАВНА КУРА РОÇÇИЙАРИ БУРЖУАЗИ САВАНСА КĔРЛЕТ, ПИРĔН ТĂВАН, ХАМĂРĂН ЙУНПА ШÿТЕРНĔ РОÇÇИЙА СОВЕТЛĂ ФЕДЕРАТИВЛĂ СОЦИАЛИСĂМЛĂ РЕСПУБЛИКĂ ÇИНЕ ТАПĂНСА КИЛЧĔÇ. ПИРĔН РЕВОЛЮЦИНЕ, ЕПĔР КĔРЕШСЕ ИЛНИСЕНЕ ВИЛĔМ ПЕК ХĂРУШЛĂХ ХĂРАТСА ТĂРАТЬ. НИМĔÇ БУРЖУАЗИЙĔ РОÇÇИЙА БУРЖУАЗИНЕ ÇĂЛМА КИЛЕТ. ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ БУРЖУАЗИ ХĂЙЕН УМНЕ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИАТА МĂЙРАН ПĂВСА ВĔЛЕРЕС ТĔЛЛЕВ ЛАРТАТЬ, ÇАВНА ТĂВАС ПУЛСАН БУРЖУАЗИН РОÇÇИЙАРИ ХĔРЛĔ, СОЦИАЛИСĂМЛĂ ПРОЛЕТАРИАТА ЙЕПЛЕ ПУЛСАН ТА ÇАПСА ЛАПЧĂТСА ПĔТЕРСЕ ХУМАЛА.

ЙУЛТАШСЕМ! ХАМĂР КУН-ÇУЛА ТАТСА ПАРАССИ ПИРĔН ХАМĂР АЛĂРАХ. ХАМĂРĂН СОЦИАЛИСĂМЛĂ ТĂВАН ÇĔРШЫВА ÇĂЛСА ХĂВАРАССИ ТАТА ÇАПЛА ТУНИПЕ ПĔТĔМ ТĔНЧИПЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИСĂМЛĂ РЕВОЛЮЦИНЕ ХĂВАРТЛАТАССИ ПИРĔНТЕН КИЛЕТ. ТĂШМАН ХАЛĔ ТЕ ВĂЙЛĂ-ХА, ВĂЛ ПУР ЙЕНЧЕН ТЕ КУÇСА КИЛЕТ. ПИРĔН ДОНЕЦК БАССЕЙНИ УМĔНЧИ ХĂРУШЛĂХ ТÿРЕХ КИЙЕВ ЙЕНЧЕН КИЛЕТ. УНТА ĔНТĔ ПЕТЛЮРĂСЕМ, ВИННИЧЕНКĂСЕМ ТАТА УКРАИНĂ ХАЛĂХĔН ЫТТИ ПРЕДАТЕЛĔСЕМ ЙЕРТСЕ ПЫНИПЕ НИМĔÇ БАНДИСЕМ ПАТША ПУЛСА ТĂМА ПУÇЛАÇÇĔ.

ЙУЛТАШСЕМ! ПРОЛЕТАРИАТ ИДЕАЛĔСЕМ КАМШĂН ХАКЛĂ, ÇАВСЕМ ПУРТЕ, РОÇÇИЙАНА ИРĔКЕ КĂЛАРАССШĂН КĔРЕШСЕ ПИРĔН ТĂВАНСЕМ ТĂКНĂ ЙУНА КАМ ХАКЛАТЬ, ÇАВСЕМ ПУРТЕ, ЕТЕМЛĔХЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАКАН ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ СОЦИАЛИСĂМ КАМШĂН ХАКЛĂ, ÇАВСЕМ ПУРТЕ, ПУРТЕ, ПĔР ÇЫН ПЕК КАР ТĂРСА—ПĂШАЛ ТЫТĂР!

АЛЛА ПĂШАЛ ТЫТСА, ЙĔРКЕЛЕННĔ ТИМĔР РЕТСЕМПЕ ĔÇ ТĂШМАНĔСЕНЕ, ХАРАМПЫРСЕНЕ, НИМĔÇСЕМПЕ ВЫРĂССЕНЕ ТАТА УКРАИНА ШУРГВАРДЕЙЦИСЕНЕ ÇАПАР.

ЧĂНЛĂХ ПИРĔНПЕ! ПИРĔНТЕ ВĂЙ! ЕПĔР ÇĔНТЕРЕТПĔР!

ĔМĔРХИ ПУСМĂРÇĂСЕНЕ ХИРĔÇ ПĔР ХĔРХЕНÿСĔР ПЫРАКАН ТАСА КĔРЕШÿ СЫВĂ ПУЛТĂР!

СЫВĂ ПУЛТĂР ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ РЕВОЛЮЦИ!

СЫВĂ ПУЛТĂР СОЦИАЛИСĂМ!

Луганск, 1918 ç. Мартăн 5-мĕш.

Интервентсем мĕнле ĕçленĕ

Новый Бугри Австро-венгри коменданчĕ ПĔЛТЕРНИ

КАМ ТА КАМ АВСТРО-ВЕНГРИ КОМАНДОВАНИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА АГИТАТОРСЕМ ТЫТСА ПАРАТЬ, ВĂЛ КАШНИ ÇЫНШĂН ÇАКĂН ПЕК ПРЕМИ ИЛЕТ:

1) КĂТАРТСА ПАНĂШĂН ЙЕ СВЕДЕНИСЕМ ПĔЛТЕРНĔШĔН 100 ТЕНКĔ,

2) ĂНА ПИРĔН КОМАНДОВАНИНЕ ИЛСЕ КИЛСЕ ПАРСАН 200 ТЕНКĔ ТАТА

3) ТĔРЛĔРЕН ВĂРĂ-ХУРАХЛА БАНДĂСЕН ПУÇЛĂХĔСЕНЕ ТЫТСА ПАНĂШĂН 500 ТЕНКĔ.

НОВЫЙ БУГРИ 3/90 БАТ, КОМЕНДАНЧĔ.

Шурă польаксен тискерлĕхĕ

1920 çулхи майăн 16-мĕшĕнче „Коммунист" хаçатра çакăн пек заметкă пичетленнĕ:

ОДЕССĂ, майăн 7-мĕшĕ. Польаксем га та вĕсемпе пĕрле ĕçлекен петлюровцăсем йышăнса илнĕ районта йунлă погромсен çĕнĕ хумĕ вăйланса пырать. Тетийев йатлă местечкăри хÿтлĕхсĕр йеврей халăхне калама çук хăрушă погром тунă. Тăватă пин çынна пусса вĕлернĕ. Йеврейсем тарса пытаннă синагога бандитсем йĕри-тавра хупăрласа илнĕ те, никама та кăларма ăр, пур йенчен те вут тĕртсе йанă, кăкăр ĕмекен пĕчĕк ачасене те касса ваклană. Хăшпĕр ачасенне куçĕсене тĕксе шăтарнă. Мĕн пур çăлсене çын вилисемпе тултарса лартнă. Местечкă пулнă вырăнта ишĕлчĕк-купи çеç тăрса йулнă.

Ходарково йатлă местечкăра тата хăрушăрах погром пулса иртнĕ. Апрелĕн 24-мĕшĕнче çĕрле местечкăри сывăракан халăха пулеметсемпе винтовкăсенчен персе вăратнă. Йеврей халăхĕ хуларан тухса, местечкăран пилĕк çухрăмра ларакан Попельнайа станци йенеле тарма пуçланă. Таракан халăха бандă хăваласа çитнĕ те, йуханшыв патне хупăрласа пынă, нумайĕшĕсем шыва путса вилнĕ. Ыттисем çине пăшалпа пенĕ. Темиçе сехет хушшинчех 800 çын пĕтнĕ. Польаксем Пйатигоры йатлă местечкăра та çавăн пекех тискер погром туса иртернĕ.

Украинари комсомол сйесĕн тăваттăмĕш пайĕ—фронтра

Майăн 11—16-мĕшĕсенче Харьковра комсомолецсен пĕтĕм Украинари иккĕмĕш сйесĕ пулса иртнĕ. Делегатсенчен нумайĕшĕ нимĕн тăхтаса тăмасăрах Польшă фронтне тухса кайма килĕшнĕ. Сйес йышăннă тăрăх, сйес делегачĕсенчен 25 проценчĕ хĕвеланăç фронтне тухса кайать.

„Коммунист" хаçатран.

Интервентсем Украинана çаратни

Продовольстви министерстви йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине пĕлтерни

Кăçалхи ийунĕн 30-мĕшĕнче есĕр йанă 2-мĕш №-лĕ отношенине ответлĕсе, продовольстви министерстви çапла пĕлтерет: министерствă аллинчи сведенисем тăрăх, центрти державăсемпе тунă суту-илÿ договорĕн контингенчĕ валли ийунĕн 20-мĕшчен йутçĕршывсене çакăн пек продовольстви грузĕсем йанă:

Тырă	6.345 вагон
Çăмарта	402 вагон
Выльăх	29.479 штук

Кусемсĕр пуçне:

Сахăр	1.634 вагон
Çĕрулми	327 вагон
Пахча-çимĕçсем	144 вагон
Тĕрлĕрен çусем	307 вагон
Лашасем	2.851 вагон
Тирсем	66 вагон
Выльăх апачĕ	259 вагон

Тата Австро-Венгри влаçĕсем йанă тĕрлĕрен грузсем, вĕсем хушшинче тырă та пур, çар тата интендантла грузсем, 8.676 вагон.

Министр (алă пуçнă).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Декабрĕн 23—24-мĕшĕсенче Центри Китайра вăрçă ĕçсем пуринчен ытларах фронтăн кăнтăр участкинче—Ханчжоуран (Чжецзйан провинци столицинчен) çурçĕре-çурçĕр-хĕвеланăç йенне пулса пынă. Кирлĕ пулсан сиктерсе йарас тесе, Китай çарĕсем Ханчжоу патĕнчи чукунçул кĕперĕ айне динамит хунă.

Нанкин-Ханчжоу шоссе çулĕ çинче ларакан Танси йатлă пĕчĕк хулана йапонецсем декабрĕн 21-мĕшĕнче йăлтах çунтарса йанă.

Нанкинран çурçĕрелле шăпланни сисĕнет. Çăмăрсем пуçланни активлăн вăрçма чăрмантарать.

Декабрĕн 22-мĕшĕнче Йапонин 12 бомбовозĕпе 8 истребителĕ Цзйанси провинцин столици—Наньчан хули çийĕ (Нанкинран кăнтăр хĕвеланăçнеле) бомбăсем пăрахма хăтланнă. Хула патĕнче Йапони самольочĕсене хирĕç Китай ескадрилĕ тухнă. Сывлăшра çапăçнă хыççăн Йапони самольочĕсем кайала çавăрăнса кайнă. Китай авиацийĕ хысăлтан хăваласа кайса Йапонин икĕ бомбовозне персе ÿкернĕ. Китай льотчикĕсене Наньчанре савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Шкул ачисем льотчиксене чечексем персе панă.

Китай хулисемпе йалĕсене тытса илсе, Йапони военщини мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарать. Йутçĕршыв сыннисем каласа панă тăрăх, йапонецсем Нанкинра тăватă кун хушшинче вуншар пин çын вĕлернĕ. Беженецсем пырса тухнă районта çамрăксен ушкăнĕсене, вĕсем—салтаксем тесе, йапонецсем пулеметсемпе персе вĕлернĕ. Вĕсем нумай хĕрарăмсене ирĕксĕрленĕ. Хула урамĕсем çын виллисемпе тулса ларнă. Шанхайра йапонецсем тăватă уйăх хушшинче мирлĕ граждансене 41 пин çын вĕлерсе пĕтернĕ.

Çурçĕр Китайра Китай çарĕсен партизанла отрйачĕсем пĕрлешсе çапăçнипе декабрĕн 20-мĕшĕнче Дамин хулине туртса илнĕ (Хебей провинцин кăнтăрти пайĕнче). Шаньдун провинцин хĕвеланăç пайĕнче декабрĕн 21-мĕшĕнче Китай çарĕсем Чаочен хули патĕнче (Даминран кăнтăр-хĕвелтухăçнеле) Йапони чăçĕсене вăйлă поражени тунă, Йапони йенче 300 çын вилнĕ, 200 аманнă.

(ТАСС).

Теруел патĕнче çĕнтерни—республикă çарĕсен пысăк пахалăхне кăтартса парать

Республиканецсем 1.500 çын ытла тыткăна илнĕ

Республикă çарĕсем хĕвелтухăç (Арагони) фронтĕнче тапăнса пынă хыççăн чаплă çĕнтерÿ тÿрĕç, вĕсем фашиссен вăйлă тĕреклетнĕ опорлă пунктне—Теруел хулине тытса илчĕç. Теруел хулине тата вăл хула таврара пĕтĕм района тытса илсе, республикă çарĕсем республиканецсен çапăçу линине хĕсĕнсе кĕнĕ фашиссен савăлне 15—20 километр касса татрĕç.

Центрти (Мадрид патĕнчи) республика çарĕсен Главнокомандуйушчийĕ Миаха генерал Франци пичечĕн представителĕсене çапла паллă туса каланă: „Республикă çарĕ тунă çĕнтерÿн пахалăхĕ Теруеле йышăннă фактпах пĕтмест-ха. Çак çĕнтерÿ вăл—пирĕн çарсем чи хайар çапăçусене те ăнăçлăнах тÿсме пултарнине кăтартса панĕ. Вăл çапăçусем республикă çарĕ тăшманăн йăвăр сухатусем тÿснĕ çарĕнчен малта тăнине кăтартрĕç. Республикă çарĕ хăйĕн вăйне, лайăх организациленнине тата хăйĕн командованийĕн пысăк пахалăхне кăтартса панĕ".

Йулашки сведенисем тăрăх, Теруел патĕнче çапăçнă вăхăтра республиканецсем 1.500 çын ытла тыткăна илнĕ, 15 оруди, вуншар пулемет, питĕ нумай винтовкăсем тата тĕрлĕрен çар снарйаженийĕсем туртса илнĕ. Пăлхавçăсен Теруел гарнизонĕнче пулнă пулеметчиксен ротипе çуран çар роти республиканецсен йенне тарса каçнă.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче фашиссем Теруел районĕнче çапăçакан республикă çарĕсен сылтăм флангĕ çине атакă тунă, вăл атакăна çăмăллăнах сирсе йанă.

Республикă авиацийĕпе тĕл пулма хăракан фашисла самолетсем, хăйсем вăйсăрришĕн тарăхса, хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем пуçтарăннă участкă çине бомбăсем пăрахнă. Ăнсăртран телей пулнипе, бомбă пăрахнăран çынсем нумайах вилмен.

Республикăлă Испанин паттăр çарĕсем Теруеле йышăннă хыççăн та тапăнса пыраççĕ. Çарсен шухăш-кăмăлĕ калама çук çирĕп. Сакăр кун хушши наступлени тунипе ывăннă пулсан та, бойецсем хăйсен вырăнĕнчех йулаççĕ, хăйсем вырăнне çĕнĕ чăçсем йама килĕшмеççĕ. Çапăçусем Теруелтен 10—12 километр хĕвеланăç йенче пыраççĕ.

(ТАСС).

фашисла çĕршывсенче

Германи халăхне „çĕнĕ çул парни"

БЕРЛИН, декабрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Продовольствипе йалхуçалăх министрĕ Дарре Германи халăхĕ патне „çĕнĕ çул парни" вырăнне 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче сйес „йеркене" кăтартса паракан циркулйар йанă.

Дарре циркулйарĕ халăха йанвар уйăхĕ хушшинче чи малтан çĕрулмине, сĕт порошокĕпе, хăймине уйăрса илнĕ сĕтпе, сельодкăпа, тутлă кăпшанка т. ыт. те тăранма хушать.

Итали халăхĕ фашисăм режимне кураймасть

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Францин „Эвр" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Итали питех те йăвăр лару-тăрура пурăнать. Кăшт кăна текен ĕççĕрлĕх халĕ правилă пулса тăнă. Рабочисем ернере 20 сехет çеç ĕçлеççĕ. Квалификацилĕ рабочисем ĕç укçи питĕ сахал илеççĕ.

Итали общественносĕ Итали фашисĕсен Испанири вăрçи çине тăшманла пăхать. Пур çĕрте те фашисăма хирĕçле пиншер листовкă саланать. Турин тата Милан пек пысăк хуласенче прокламацисем сыпăçтараççĕ. Вăл прокламацисенче çапла каланă: „Пире чухăнлăха илсе пыракан, пирĕн ачасене вĕлерме хатĕрленекен фашисăма вилĕм! Пирĕн тивĕç—вăрçăна чăрмантарасси пулать! Вилĕм патне çитсе тăнă фашисăм пире хăй хатĕрлекен пĕтĕм тĕнчери вăрçăна хутшăнтарасшăн. Фашисăма таптаса лапчăтăр! Республикăлă Испанийе çăлса хăварар!"

Польшари ĕççыннисен чухăн пурнăçĕ

ВАРШАВĂ, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Польшă пичечĕ çĕршывра ĕççĕрлĕх пысăккăн ÿснĕ пирки тревогă çапать. Ĕççĕррисене регистрациленин хисепĕ нойабĕрĕн 15-мĕшĕнчен декабрĕн 15-мĕшне çитиччен 111 пин çынна çити ÿснĕ. Варшавăра ĕççĕррисен демонстрацийĕсем пулса иртеççĕ.

Забастовкă йухăмĕ ÿсет. Польшăн пĕр пысăк промышленносăлă центрĕнче—Лодзире—хула предприйатисенчи рабочисем хăйсене хĕллехи пĕр вăхăтлă пособи пама ыйтса забастовкă тăваççĕ.

Польшăра фашисла влаçсем халăх шкулĕсенче вырăн çитмен пирки тесе, хутла вĕренесрен сирсе хăварнă çынсем пĕр мĕлйуна йахăн пур. Вĕсем хушшинче хресченсем ытларах. Вăтам шкулсен алăкĕсем те вĕсемшĕн çавăн пекех хупă. Польшă пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕр Седльц хулинче кăна (Люблинри войеводствă) „вырăн çитмен пирки" темиçе вуншар хресчен çамрăкĕсене, вĕсем екзамен тытнă пулин те, вăтам шкула илмен.

Польшă пичечĕ илсе кăтартнă сведенисем. Польшăри вĕренекен çамрăксен пурнăçĕ малала та начарланса пырасси çинчен калаççĕ. 1936—37 вĕренÿ çулĕнче студентсен сывлăхне пăхса тухсан туберкулйозпа чирленисем 38 проц. пулнине палăртнă, вăл иртнĕ вĕренÿ çулĕнчинчен ытларах пулать.

Туберкулйозпа чирлисем хресчен семйинчен тухнă студентсем хушшинче ытларах пулнă. Ку вăл Польшă хресченĕсем питĕ чухăн пурăнни çинчен калать. Пĕтĕм студентсенчен 30 проценчĕ тăраниччен çийеймен, вĕсене хупса çитерме кирлĕ.

(ТАСС).

Тĕнчери лару-тăру

(Й У Л А Ш К И)

Çапла ĕнтĕ, Францин йутçĕршыв ĕçсен министăрĕн Франци влийанийĕ шĕвелсе пынине. Тĕп тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Йевропăра унăн позицийĕ вăйсăрланса пынине курса илме ытлăн-çитлĕнех май пулнă.

Çавăн сăлтавĕ мĕнре-ха? Агрессорсем вăйланнинчен-и? Çук, унта мар. Германипе Италин малти лару-тăрувĕ лайăхланса пымасть, хăвăрт начарланса пырать. Сăлтавĕ çакăнта пулать: Франци Англи хыççăн кайса, агрессорсене отпор парассине организацилемен, агрессорсене валли пĕр чăрусăр ĕçлемели условисем тума ирĕк, паллă, çапла тунипе пĕчĕк государствăсем коллективла хăрушсăрлăха тата Лига нацине ĕненессине вăйсăрлатса хавшатнă. Лаваль Абиссинире Итали авантури вăхăтĕнче тытса пынă политикă тĕлĕшпе пĕррремĕш пример пулнă. Англипе Франци Испанире „хутшăнмалла мар" политикă тытса пыни—çавăн йышши иккĕмĕш усă пример пулса тăрать.

6-мĕш нойабĕрте фашисла Итали „Коминтерна хирĕçле кĕрешÿ" текенни сумне, урăхла каласан, висĕ агрессор (Германи, Йапони тата Итали) тунă блок сумне хутшăнни, декабрĕн 11-мĕшĕнче вара фашисла пысăк совет Итали Лига нацирен тухасси çинчен решени йышăнчĕ. Итали решенийĕ, вăл Германипе тата Йапонипе тунă договорпа илнĕ обйазательствăсенчен тухса тăни питех те уççăн курăнса тăрать. Çакă вăл пĕр паллă чăнлăха татах та татах çирĕплетсе парать: агрессорсен блокĕ, „большевисăма хирĕç кĕрешес" флагпа витĕнсе, мире хирĕç кĕрешес тĕп тĕллев лартать. Нĕрпĕр майпа Лига нацине сирпĕтсе йарасси, паллах, çав плана кĕрет.

Итали Лиги нацирен тухни Женевăна нимĕн чухлех те тĕлĕнтермен. Итали çулталăк ытла ĕнтĕ Лига нацине чĕннине хутшăнса ĕçлемест. Италипе мирпĕн тăракан государствăсен хисепне нийепле те кĕртме май çук. Çапла вара, Лига наци сухату пулнин питех туймал. Муссолинин „историлĕ хăласлăвĕ" ĕнтĕ пушă сас пек йанăраса кайнă.

Фашисла пысăк совет решенийĕ тепĕр хут çакăн çине кăтартса парать: фашисла Итали хăйĕн тулашри политикăра хăй-халĕйлĕхе çухатнă. „Рим—Берлин тĕнĕлĕ" пуçланса кайнă хыççăн çав политикă пуринчен ытла Берлинран килĕ, халĕ ĕнтĕ тата та ытларах „Рим—Берлин—Токио тĕнĕлĕнчен" килет.

Анчах ĕç Италире мар! Италипе Лига нацирен кăларса, агрессорсен блокĕ Лигăна çапасшăн пулни йар-уççăн курăнса тăрать. Лига нацире агрессине хирĕç кĕрешме май пуррине вăрçă чĕртекенсем питĕ лайăх пĕлсе шута илеççĕ.

Йутçĕршыв пичечĕ Итали Лига нацирен тухасси çинчен йышăннă решенийе лорд Галифакс нумай пулмасть Гитлерпа калаçнипе çыхăнтарать. Ку шухăша тата та сарма пулать, мĕншĕн тесен агрессорсен блокĕ Лига нацине çапла хăтланни Хĕвеланăçри буржуалă-демократилĕ державăсем, чи малтан Англи, агрессорсемпе килĕшÿ тума май шырас политикăпа тÿррĕм çыхăнса тăрать.

Чăн та, буржуалă-демократилĕ пултăра державăсен йулашки çулсенчи практики агрессора отпор парассинче мар, йăлтах урăхла, мĕн пур майпа ăна кăмăл тăвассинче пулнă.

Германи фашисăмĕн сĕмсĕр требованийĕсене сÿтсе-йавнă Англипе Франци калаçăвĕ мĕнпе пĕтнĕ-ха? Агрессора çаварлăхламали мĕнле те пулин мелсем йышăнни? Çук, йышăнман! Англипе Франци калаçăвĕнче коллективла-хăрушсăрлăх принципĕсенчен чакса кайса агрессорпа килĕшÿ тума май шырас туртăм палăрчĕ. Çавăн хыççăн агрессорсен сĕмсĕрлĕхĕ ÿссе пынинчен мĕн тĕлĕнмелли пур?

Агрессорсем хĕсесси пиллес политикăпа пула кăна мар, агрессилĕ блокра тăракансен пурин те малти йăвăрлăхсем пуррине пула та ÿссе пырать. Çав йăвăрлăхсем пурне те паллă. Итали тусăнса пĕтес патне çитнĕ. Германире халăх выçăпа касăлса пурăнать. Йапони нарăмĕ çĕршывăн нацилĕ доходĕнчен иртсе кайнă. Агрессорсен ури айĕнче çĕр çунать. Вĕсем çав тери вăйлă мар. Çавăнпа вĕсене çаварлăхласа лартма пур майсем те пур. Апла пулсан, вăрçă чĕртекенсем тĕлĕшпе буржуалă-демократилĕ державăсем çине тăрса пиллес политикă тытса пынине пушшех те каçарма май çук.

Чăваш Йалхуçалăх Институчĕ

института кĕме хатĕрлекен курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Курса 17 çултан пуçласа 34 çула çитнисене, вăтам шкул пĕтернисене йе вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнче, педучилищĕ, рабфак тата техникум йулашки курсĕнче вĕреннисене илеççĕ.

Зайавленисене директор йачĕпе йамала тата унпа пĕрле çак документсем пулмала: автобиографи, аттестат йе вĕренни çинчен справкă, çурални çинчен тата сывлăх çинчен справкă, висĕ фотоÿкерчĕк.

Зайавленисене декабрĕн 30-мĕшчен йышăнаççĕ, 31-мĕшĕнче испытани пуçланать.

Курсантсене общежити тата стипенди параççĕ.

ДИРЕКЦИ.

1937 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа

Чăваш АСС Республикинчи кино театрсен екранĕсем çинче

Саслă, илемлĕ, историлĕ-революцилĕ пысăк фильм

„ЛЕНИН в ОКТЯБРЕ"

кăтартаççĕ

„Мосфильм" киностудийĕ тунă.

Сценарий авторĕ *А. КАПЛЕР.*

Тĕп рольне ССР Союзĕн Халăх артисĕ Б. В. ШЧУКИН выльать.

Вырăнсенчи кинотеатрсенче хăçан кăтартассине хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтернине асăрхăр!

Росснабфильм трестăн Чăваш кантурĕ.

Шупашкарти саслă кино-театрта

Декабрĕн 26-мĕшĕнче

çĕнĕ, илемлĕ, историлĕ революцилĕ саслă фильм

„ЛЕНИН в ОКТЯБРЕ"

кăтартма пуçлаççĕ.

Сеанссем—4, 6, 8 тата 10 сехетсенче пуçланаççĕ.

Билетсене зайавкăсем тăрăх организацисем малтан илсе хума пултараççĕ.

Дирекци.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус; 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 986. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13780. 58—92 зк. 1—1 п. л.